# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ — 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

40 (9075) № * Эрнекун, 2023 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 13-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Муркашра паян – Тыр-пул уявĕ

## Вырмара хастарлăхпа палăрчĕç




*Ĕç ӳсĕмĕпе ăнăçу çĕнĕ технологисемпе ĕçленинчен, хăватлă техникăпа усă курнинчен никĕсленсе пырать. «Герой» пĕрлешӳллĕ хуçалăх комбайнерĕсемпе калаçсан, вĕсем уй-хир ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлани хуçалăх аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланнине пĕлтерчĕç. «Хушнă ĕçе вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçласси – пирĕншĕн тĕп вырăнта», – терĕç вĕсем.*

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан механизаторсем (сулахайран сылтăмалла: Георгий Шурнов, Илья Дмитриев, Владимир Степанов, Алексей Иванов) – çултаăкĕпех пĕрлешӳллĕ хуçалăх производствинче. Вĕсене çур аки, ут çи, вырма, кĕр аки вăхăтĕнче ялан хирте тĕл пулатăн. Иртнĕ вырмара вĕсем туслă ĕçлесе 600 гектара яхăн тыră-пулăна «Акрос-530», «Акрос-585» комбайнсемпе вăхăтра пуçтарса илчĕç. Ампар виçипе гектар пуçне 32,9 центнер тухăç илсе кĕлете пурĕ 1945 тонна çĕнĕ çăкăр, 143 гектар çинчен 143 тонна рапс, 32 тонна люцерна кĕртсе хума пултарчĕç. Паян вĕсем люцерна юлашки гектарсем çинчен пуçтарса кĕртессипе тăрăшаççĕ. Умра – техникăна хĕллехи управа лартасси. Кунта та вĕсем ала усмасса шанас килет.*

**Анатолий БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ĕçлĕ çыхăну

## Чăваш Ен хăмлине туянаççĕ

Килĕшĕве Мускавра «Золотая осень» агропромышленноç выставкинче алă пуснă. Сăра туса кăларакан «Балтика» компани Чăваш Ен Ял хуçалăх министерствипе пĕрле республикăра хăмла туса илессине аталантарĕç, çавăн пекех отрасле патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтермелли мелсене туса хатĕрлĕç. Инвестицисемсĕр пуçне компани специалисчĕсем хăмла çитĕнтерекенсене чĕр тавар тирпейлессин технологийĕн ыйтăвĕсемпе консультацисем парĕç.

Чăваш Енри фермер хуçалăхĕ завода хăмлан пĕрремĕш партине çитерсе панă ĕнтĕ. Унран чапа тухнă «Балтика 3» туса хатĕрлĕç.

Паянхи куна Чăваш Енре хăмлан 90 процентне туса илеççĕ. Ку вăл 200 тоннăна яхăн. Анчах та çакă импорта ылмаштарма çителĕксĕр – рынок калăпăшĕ 4500 тоннăпа танлашать. Патшалăхăн калăпăшлă программисĕр кирлĕ чухлĕ чĕр тавар туса илессине тивĕçтерме май çук. Çапла шутлать «Балтика» компани вице-президенчĕ Юрий Чентырев.

«Чăваш Енсĕр пуçне урăх нимĕнле регионта та хăмла туса илессине çавăн пек субсидилени çук. Субсидисем проектсене пурнăçа кĕртме кайнă расхутсене 16 – 17 çул вырăнне 7 – 8 çул хушшинче саплаштарма май параççĕ. Малашне «Балтикăпа» çыхăнса ĕçлени отрасле аталантарассине хавхалантармалли мелсене çĕнетсе лайăхлатма пулăшасса шанса тăратăп», – тесе палăртнă Чăваш Ен вице-премьерĕ, ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов.

**Чувашинформ.**

Çитĕнӳ

## Куравран – 80 медальпе

**Çĕршывăн «Золотая осень» агропромышленноç выставкинче Чăваш Енри тавар туса кăларакансем продукци пахалăхĕшĕн 80 медале тивĕçнĕ – 52 ылтăн, 23 кĕмĕл тата 5 бронза медале.**

Регион ертӳçи Олег Николаев хăйĕн телеграм-каналĕнче каласа панă тăрăх, Чăваш Ен экспозицийĕнче 21 тавар туса кăларакан хăйсен продукцине кăтартнă. Стенд выставкăна хутшăнакан çĕршер çынна пуçтарнă, дизайнĕпе те, лару-тăру туйăмĕпе те тĕлĕнтернĕ: севок сухан, хăмла пучахĕсем, чей, пыл, пылак çимĕç, напитоксем, сĕт продукцийĕ. Хăйĕн çитĕнĕвĕсене «Агромаш» трактор техники те кăтартнă.

Агрофестивальре Мускаври Тверь площадĕнче Ольга Кошелева фермерăн сырĕсемпе, Етĕрнери аш-какай комбиначĕн наци аш продукчĕпе «Шăрттанпа» тата «Сырьезная компания» çемье производствин пылак çимĕçĕсемпе паллашма май пулнă.

**Сăмах май.** Агропромышленноç выставкине муркашсем те хутшăннă. «За производство высококачественной пищевой продукции» номинацире «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики ылтăн медале тивĕçнĕ.

«За достижение высоких показателей в развитии племенного и товарного животноводства» номинацире вара Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативне уйрăмлăх паллипе наградăланă.

Бюджет

## Хушма укçа-тенкĕ – социаллă сфера валли

Чăваш Республикин бюджечĕн хушма укçи-тенкине социаллă сфера учрежденийĕсем валли уйăрĕç – больницăсем, шкулсем, культура объекчĕсем валли. Кун пирки Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев республика Патшалăх Канашĕн Призидиумĕпе тата фракцисен ертӳçисемпе тĕл пулнă чухне пĕлтернĕ.

Тĕл пулура республикăн 2023 çулхи тата 2024 çулпа 2025 çулхи тапхăрти бюджетне улшăнусем кĕртесси пирки калакан саккун проектне сӳтсе явнă.

Саккун проекчĕпе килĕшӳллĕн республикăн 2023 çулхи бюджечĕ тупăшсем енĕпе 7,1 млрд тенкĕ ӳсет, пĕтĕмĕшле 89,9 млрд тенкĕпе танлашать (2022 çулхипе танлаштарсан, 109 процент). Расхутсем 7,9 млрд тенкĕ ӳсеççĕ, пĕтĕмĕшле 97,9 млрд тенкĕпе танлашаççĕ е 2022 çулхинчен 21,8 процент ытларах.

Хушма укçа-тенкĕн ытларах пайне – 4,2 млрд тенкĕ (53,2 процент) культурăпа социаллă сфера валли уйăраççĕ. Пĕтĕмĕшле вара 2023 çулта асăннă сфера валли 58 млрд тенкĕ уйăраççĕ.

Кунсăр пуçне хушма укçа-тенкĕн виççĕмĕш пайне – 2,7 млрд тенкĕ (34,2 процент) капиталлă строительство объекчĕсем валли хывма палăртнă. Çапла вара 2023 çулта инвестици расхучĕсем 13,7 млрд тенкĕпе танлашмалла. Çакă вăл иртнĕ çулхи шайран 1,6 хут нумайрах.

Çулталăк бюджетне тӳрлетӳсем кĕртнĕ май, укçа-тенкĕн ытларах пайне çак енсемпе уйăрĕç:

– 1,9 млрд тенкĕ – вĕренĕве аталантарма;

– 1,5 млрд тенкĕ – сывлăх сыхлавĕ валли;

– 1,5 млрд тенкĕ – наци экономики валли;

– 1,3 млрд тенкĕ – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх валли.

Çавăн пекех наци проекчĕсене пурнăçа кĕртме уйăракан укçа-тенкĕ калăпăшĕ самай ӳсет – хушма укçа 2,6 млрд тенкĕ уйăрнине шутласан, пĕтĕмĕшле 15 млрд тенкĕпе танлашать. Ку вăл 2022 çулхинчен 10,5 процент нумайрах.

Кунсăр пуçне муниципалитет йĕркеленĕвĕсене укçа-тенкĕ уйăрса парса пулăшасси те 3 млрд тенкĕ ӳсет.

**Хамăр инф.**

Культура

## Ял çыннисем патне – автоклуб

Пĕлетпĕр, кашни округрах катара вырнаçнă пĕчĕк ялсем те çук мар. Кун пеккисенче кашниничех клуб туса лартаймăн. Çынсен вара пурнăç уттинчен юлмалла мар, культурăллă канма, хăйсен культура шайне хăпартма майсем пулмалла. Çавна май республикăра кун пек ялсене пултарулăх ушкăнĕсене тухса çӳреме автоклубсемпе тивĕçтерессипе ĕçлеççĕ. Автоклуб туянма муниципалитетсем хушшинче конкурс ирттереççĕ, çĕнтернисене субсидипе тивĕçтереççĕ.

Республика комиссийĕ кăçалхи конкурса пĕтĕмлетнĕ. Конкурсра çак муниципалитет округĕсем çĕнтернĕ тесе йышăннă: Етĕрне – 20 балл, Муркаш – 19 балл, Тăвай – 17 балл, Вăрмар – 17 балл, Йĕпреç – 16 балл.

Чăваш Республикин Культура, наци ĕçĕсен тата архив ĕçĕн минстерстви пĕлтернĕ тăрăх, асăннă муниципалитет округĕнчен кашниех ятарлă автотранспорт – автоклуб туянма республика бюджетĕнчен 9-шар миллион тенкĕне тивĕçет.

**Хамăр инф.**

Çырăнтару – 2024

## Хаçата çитес çул илсе тăма

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2024 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Хаçата ултă уйăха çырăнмалли хак – 534 тенкĕ те 96 пус.**

**Редакци.**

Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕçĕ-хĕлĕ

# Çатракасси территори пайĕ

## Çатракасси, Кашмаш, Хуракасси выççăлкки, Çĕньял Хуракасси, Йӳтĕркасси, Ятман, Çĕньял Очăкасси, Шупуç, Торинкасси, Йĕрĕхкасси, Очăкасси ялĕсем

# «Пирĕн Надежда Геннадьевна»




Очăкасси клубне пĕлтĕр тĕпрен юсанă хыççăн савăнăçлă лару-тăрура уçнă.



Кашмашра шыв пăрăхĕсене улăштарассипе калăпăшлă ĕçсем туса ирттернĕ.



Ятманта та халĕ плотина хĕрринче хăтлă кану вырăнĕ пур.



Çатракассинчи Çĕнтерӳ паркĕнчи çак илемлĕ пĕвене çамрăксем хăйсем пĕвелеттернĕ.

***Çапла калаççĕ ун пирки ял çыннисем. Кĕçĕнреххисем – хисеп туса, аслăрах çулсенчисем – юлашки вăхăтра хăйсен пурнăçĕнче пулса иртнĕ ырă улшăнусемшĕн тав сăмахĕ каланă май. Сăмах вара Муркаш муниципалитет округĕн Çатракасси территори пайĕн пуçлăхĕ Надежда Никитина пирки.***

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче, кăçалтанпа территори пайĕн ертӳçинче тăваттăмĕш çул вăй хурать. «Кун пек ертӳçĕ пирĕн патра пулманах. Мĕнле кăна ĕлкĕрсе çитет, вăхăтне ăçтан тупать», – тĕлĕнеççĕ унран. Тĕлĕнмелли вара чăннипех те сахал мар. Ял çыннисен çултан çула тăсăлса пынă сахал мар ыйтăвне Надежда Никитина вырăнти пуçлăхра тăрăшнă тапхăрта татса пама май килнĕ вĕт-ха. Ан тив, пур ыйтăва татса парассинче вырăнти пуçлăхăн тӳпи кăна тесе каламăпăр, апла пулин те унăн тӳпи çук тесе те никамах та çирĕплетеймĕ.

Акă Кашмашра пĕлтĕр икĕ хутлă çĕнĕ шкул хута кайрĕ, ку ялта пурăнакансен тахçантанпах кĕтнĕ ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. 108 ача вĕренмелли шкула «Вĕренӳ» наци проекчĕ шайĕнче çĕклеме май килнĕ, çавна валли федераци бюджетĕнчен 200 млн ытла тенкĕ хывнă.

Очăкасси тăрăхĕнче пурăнакансем вара кунти клуб çуртне тĕпрен юсама май килнишĕн тав сăмахĕ калаççĕ. Клуб çуртне те пĕлтĕр юсаса хăтлăлатнăччĕ. Юсав ĕçĕсене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2022 – 2026 çулсем валли çирĕплетнĕ «Строительство (реконструкция) и модернизация муниципальных учреждений культуры клубного типа» хушма программа шайĕнче туса ирттернĕ. «Стройсити» ООО капиталлă юсав ĕçĕсене 7,4 млн тенкĕлĕх пурнăçланă. Халĕ кунта çынсене культурăллă канма пур услови те çителĕклĕ: хăтлă, ăшă, ял библиотеки те çак çуртрах вырнаçнă.

Çынсен çул, ĕçмелли шыв ыйтăвĕсене татса парассипе те юлашки çулсенче территори пайĕнчи ялсенче лайăххи пайтах. Акă 2021 çулта Чăваш Республикин «Модернизация и развитие сферы жилищно-коммунального хозяйства» патшалăх программин «Модернизация коммунальной инфраструктуры на территории Чувашской Республики» хушма программине хутшăнса Муркаш муниципалитет округĕн территорийĕнче шыв башнисемпе артезиан скважинисене пĕтĕмпе 12 объектра тĕпрен юсанăччĕ. Çав шутран 6 объекчĕ шăпах ĕнтĕ Çатракасси территори пайĕнче. Çапла вара шыв башнисене тĕпрен юсаса санитари требованийĕсемпе килĕшӳллĕн норматívлă шая çитерессипе ĕçсене Шупуçĕнчи Орлов урамĕнче, Ятманти Мир урамĕнче, Очăкассинчи Восточная тата Победы урамсенче, Торинкассинче тата Çĕньял Очăкассинче туса ирттерме пултарнă.

Çатракасси территори пайĕнчи ялсенче республикăн пуçарулăх бюджечĕн программи анлă çул тупнă. Кашни çулах 2 – 3 проектран кая мар пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ. Программăна хутшăнса çынсем урамсенчи çулсене йĕркене кĕртеççĕ, ĕçмелли шыв ыйтăвне татса параççĕ, территорисене хăтлăлатаççĕ, вырăнти инфраструктурăна аталантараççĕ. Шăпах çапла майпа иртнĕ çулсенче Кашмашри Токарев, Очăкассинчи Восточная, Шупуçĕнчи Комсомольская, Кашмашри Молодежная, Çатракассинчи Нагорная урамсенчи çулсене вак чул сарса хытарма май килнĕ.

Асăннă майпа Çатракасси территори пайĕнчи ялсенче кăçал та калăпăшлă ĕçсем туса ирттерме пултарнă. Республика комиссине сĕннĕ виçĕ проекчĕ те конкурс тĕрĕслевĕ витĕр тухнă. Çак вăхăта вара палăртнă объектсене хута янă та ĕнтĕ.

Çапла вара пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе Çатракасси ялĕнчи Заовражная урам çулне Седойкино урам çулĕпе вак чул сарса сыпăнтарнă, çиелтен асфальт ванчăкĕ сарса тикĕслесе çирĕплетнĕ. Александр Данилов уйрăм предпринимателĕн строительсен юсав ĕçĕсене 2 млн та 700 пин тенкĕлĕх ытла туса ирттернĕ.

Кашмашсене тата Хуракасси выççăлккинче пурăнакансене тахçантанпах канăç паман пысăк ыйтăва та кăçал пуçарулăх бюджечĕн мелĕпех, апла пулсан ял çыннисен хăйсен те тӳрремĕнех хутшăннипе татса парас тенĕ. Сăмах шыв ыйтăвĕ пирки. Совет саманинче чавса хунă тимĕр пăрăхсем тахçанах çĕрĕше шăтса пĕтнĕ ĕнтĕ. Вĕçĕмех юсама, саплама тивнĕ.

Кашмаш ялĕ пĕчĕк мар. Унăн урамĕсенче тата Хуракасси выççăлккинче çĕнĕрен шыв пăрăхĕсем хурассипе харăсах икĕ проект хатĕрлеме тивнĕ. Кашмашри Мир урамĕнче тата Хуракасси выççăлккинче шыв пăрăхĕсем хурассипе «РАФСТРОЙ» ООО ĕçленĕ, ĕçсене 3 млн та 436 пин тенкĕлĕх ытла туса ирттернĕ. Кашмашри Советская урам тăрăх вара шыв пăрăхĕсене «БИРСА» ООО хывнă. Ку объектра ĕçсене 4 млн та 743 пин тенкĕлĕхе яхăн пурнăçланă. Шывне ял çыннисене килĕрен кĕртсе панă, счетчиксем те вырнаçтарнă.

Ял çыннисем мĕн тунипе çырлахса ларма хăнăхман. Халĕ вĕсем пуçарулăх мелĕпех Кашмаш ялĕн масарне карта тытса анлăлатас, кунта хăтлăх ĕçĕсем туса ирттерес шухăшлă. Республика программине хутшăнма ял çыннисенчен укçа пуçтарма тытăннă ĕнтĕ. Кашмашсен çак шухăшĕ те çывăх вăхăтрах пурнăçланасси иккĕлентермест.

Вырăнти пуçлăх пуçаруллă пулни ял çамрăкĕсене те тăван тăрăха хăтлăрах тăвассипе хастарлăх кăтартма хистет пулас. Акă хăш-пĕр çĕрте çавăн пеккине те курма пулать. «Ялта пĕве çук, пушар тухас пулсан мĕн курмалла? Пĕвене пĕвелемеллечĕ», – тесе ыйтаççĕ. Кунта вара пачах урăхла ӳкерчĕк. Ял çамрăкĕсем хăйсем пуçарулăх кăтартаççĕ. Хăйсем тăрăшнипе, техника тупса хăйсен укçи-тенкипе пĕвесем пĕвелеттереççĕ, хăйсемех шыва вĕтĕ пулă ярса ĕрчетеççĕ. Çитменнине кун пек тĕслĕхсем пĕрре кăна мар. Мĕншĕн тесен пĕлеççĕ – пурнăç хăтлăхĕ такам валли мар, хăйсем валлиех, ял çыннисем валли. Сергей Павлова, Виталий Шапошникова, Владимир Романова, Евгений Петрова, Алексей Яковлева ку енĕпе ырăпа палăртмалла.

Ятманти пуçаруллă çамрăксем вара Валерий Иванов предпринимать пулăшнипе кăçал плотина хĕрринчи территорие хăтлăлатса кану вырăнĕ йĕркеленĕ. Никам хушмасăрах, хăйсен пуçарăвĕпе тата тăрăшулăхĕпе. Ытти çĕрте те çук мар халĕ кун пек кану вырăнĕсем ялсенче.

Çатракасси территори пайĕнчи ял çыннисем тулли пурнăçпа пурăнаççĕ. Тăван ен аталанăвĕшĕн, унăн ырлăх-пурлăхĕшĕн пĕрле тăрăшнипе пĕрлех культурăллă канма та пĕлеççĕ. Кашмашри икĕ хутлă кермен пек хăтлă Культура çуртĕ каç-каç пушă лармасть. Вырăнти «Ăраскал» пултарулăх ушкăнне, кунти халăх театрне таврара лайăх пĕлеççĕ. Хăйсен ăсталăхĕпе вĕсем çуллен Муркаш округĕнче пурăнакансене кăна мар, кӳршĕ округсене тухса çӳресе те савăнтараççĕ. Ытти тăрăхран та кунта концертсемпе тата спектакльсемпе вĕçĕмех килсе çӳреççĕ. Ташă-юрă ăстисем те, вырăнти артистсем те çуллен округри «Чечеклен, юратнă Муркаш ен!» конкурс-фестивале хутшăнса малти вырăнсене тивĕçеççĕ. Сăмах май, территори пайĕн пуçлăхĕ Надежда Никитина та – «Ăраскал» пултарулăх ушкăнĕн активлă членĕ. Ятман клубĕнчи «Ятман ен» пултарулăх ушкăнĕ те ырă ята тивĕçлĕ.

Ял кунĕсем, вырăнти спорт ăмăртăвĕсем епле массăллă, илĕртӳллĕ иртеççĕ тата. Ку вăл – уйрăм калаçу. Кашмашсем нумаях пулмасть ял кунне епле хаваслăн ирттерни асрах-ха. Ял çыннисем, ватти-вĕтти, хăнасем пурте тулли кăмăлпа савăннă уявра. Ытти ял кунĕсем те ку тăрăхра хаваслă иртеççĕ.

Савăк та тулăх пурнăçпа пурăннипе пĕрлех çакăн пек пурнăçа паян алла хĕç-пăшал тытса хӳтĕлекенсем пирки те манмаççĕ территори пайĕнче пурăнакансем. Ялсенче, шкулсенче ятарлă çар операцие хутшăнакан салтаксем валли маскировка сечĕсем çыхаççĕ, продуктсем пухаççĕ, укçа-тенкĕ пуçтараççĕ. Çар операцине хутшăнакан ентешсем патне малти линие гуманитари пулăшăвĕпе Надежда Никитина хăй те тăватă хут кайса килнĕ. Территори пайĕнчен 11-ĕн паян унта хăйсен çар тивĕçне пурнăçлать.

Пултаруллă çын пур енĕпе те пултаруллă тесе ахаль каламан. Çавăнпах ĕнтĕ вăл иртнĕ çул ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен республика конкурсне хутшăнса иккĕмĕш вырăн йышăннăччĕ. Служба машинипе те территори тăрăх хăех руль умĕнче вĕçтерсе çӳрет. Кунпа пĕрлех вăл сăрă ăсти, администраци çуртĕн шалти стенисене чăн-чăн художник пекех сăрласа илемлетсе «чун кĕртнĕ». Кунсăр пуçне тата юрăсем те хайлать, сăвввисене хăех çырать, кĕввине кĕвĕлет, купăсне туртса ярать те юррине хăех шăрантарать:

«Кашмашсем, çатрасем,
выççăлккасем, çĕньялсем,
ятмансемпе йӳтĕрсем,
çĕнкĕнерсем, шупуçсем,
Очăкасси, Йĕрĕхкасси
тата пур Торинкасси.
Пурĕ пирĕн вунпĕр ял,
Туслă пурăнар ялан».

Çатракасси территори пайĕн гимнĕ пекех янăраççĕ Надежда Никитина кĕвве хывнă юрăри çак йĕркесем.



**Кăларăма
Владислав ШАПОШНИКОВ
хатĕрленĕ.**

Тыр-пул уявĕ умĕн

# «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики черетлĕ ылтăн медальпе таврăнчĕ

Октябрĕн 4 – 7-мĕшĕсенче Мускав хулинче çĕршывăн «Ылтăн кĕркунне – 2023» ятпа агропромышленноçăн тĕп куравĕ иртрĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх, унта отрасль конкурсĕсене йĕркеленĕ. Çулсерен çак конкурсра чи лайăх продукцисене палăртаççĕ, тупăшлă ĕçлекенсен кăтартăвĕсене пĕтĕмлетеççĕ.

Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин официаллă сайтĕнче пĕлтернĕ тăрăх, çак курава хутшăнма регионти 44 организаци заявка тăратнă, ĕç кăтартăвĕпе продукци пахалăх енĕпе 96 позицире ăмăртнă. Куравра Чăваш Ен 80 медаль çĕнсе илнĕ, вăл шутра 52 ылтăн, 23 кĕмĕл, 5 бронза.

Раççейри «Ылтăн кĕркунне – 2023» агропромышленноç куравĕнче «Птицефабрика «Моргаушская» акционерсен уçă обществин продукцине пысăка хурса хакланă. Предприяти Мускавран пысăк наградăпа, хавхаланупа – ылтăн медальпе – таврăнчĕ.

Ĕçлĕ çул çӳрев пирки эпĕ Владимир Малов ертӳçĕне каласа пама ыйтрăм.



**– Владимир Николаевич, эсир ертсе пыракан предприятие республикăра кăна мар, унăн тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ. Сирĕн патра туса кăларакан продукцие çынсем кирек ăçта та хапăл туса туянаççĕ. Эсир çынсемшĕн тăрăшни куç умĕнче.**

– Чи малтанах эпĕ пурне те Ял хуçалăхĕн тата продукци тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕпе саламлатăп. Кирек епле пуçарăва та ăнăçлă пурнăçлама, йывăрлăхсене вара çĕмĕллĕн татса пама тата тухăçлă вĕçлеме сунатăп.

Пирĕн тĕп задача – продукци туса илессине тата унăн пахалăхне ӳстересси. Апла пулсан округра пурăнакан ытларах çынна ĕç вырăнĕ туса парасси. Пĕрлехи ĕç кăтартăвĕсем, предприяти ӳсĕмĕ чи малтанах конкретлă çынсенчен килет. Çавăнпа та пирĕншĕн тĕп вырăнта яланах – ĕçлекен çын.

Пирĕн предприяти пирки калани – ӳстерсе калани мар. «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин продукцине пур çĕрте те кăмăлласа туянаççĕ. Ку, паллах, пире хавхалантарать.

**– Акă эсир Мускавран черетлĕ çитĕнӳпе таврăнтăр. Сирĕн предприятие ылтăн медальпе мĕншĕн чысларĕç-ха, хăш номинацире палăртăр эсир?**

– Пирĕн предприяти туса кăларакан продукци пахалăхĕ çӳллĕ шайрине чылай кăтарту çирĕплетет. Акă эпир Мускавра иртнĕ куравран ылтăн медальпе таврăнтăмăр. «Яйцо куриное столовое отборной категории», «Яйцо куриное столовое первой категории», «Яйцо куриное столовое второй категории» номинацисенче çĕнтертĕмĕр. Çак номинацисенче эпир улттăмĕш çул ылтăн медальпе таврăнатпăр.

Ку çитĕнӳ, паллах, чăх-чĕп фабрикинчи пĕрлехи коллективăн тăрăшулăхĕ. Çак предприятире вăй хуракансене яваплăхшăн тата тӳрĕ чунпа ĕçленĕшĕн тав тăватăп.

Çавăн пекех хамăрăн партнерсене те ырăпа асăнас килет. Пирĕн предприяти «Коминтерн» ял хуçалăх производство кооперативĕнчен, В. Бархаткин тата А. Пихтеров хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчен, «Родина» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран, «Племенной конный завод им. В.И. Чапаева» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран, А. Афанасьев тата В. Кузнецова хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчен тырă туянать, кусем – пирĕн партнерсем.

**– Сирĕн предприяти производствăна ӳстерсе пырать, цехсемпе тырă склачĕсене çĕнĕрен тăватăр, ытти объекта реконструкцилетĕр.**

– Производствăна çулсерен ӳстерсе пыма тăрăшатпăр. 4-шар пин тонна кĕрекен тырă упрамалли 4 ангар апат валли питех те мелле. Çĕннисене хута янипе пĕрле шутласан пĕр харăсах 60 пин тонна таран тырă упрама май парать. Паянхи кун тĕлне ангарсенче 34259606 кг апат хатĕр.

Чăх-чĕп сарайĕсене те çĕнететпĕр, 1 цех 104000 пуç çамрăк чĕпĕ вырнаçмалласкер. Унта талăкри чĕпĕсене лартмалли оборудование çĕнетеççĕ. 3 цех вара 100100 пуç промышленноç ушкăнĕ валли.

**– Калăпăшлă ĕçсем пурнăçласа пыратăр. Малашлăх планĕсем еплерех-ха сирĕн?**

– Предприяти малалла та ӳсĕмлĕ аталанасса шанса тăратпăр. Çак çулта коллектив умне 200 млн штук, çитес çулта 250 млн штук, 2025 çулта вара 300 млн штук çăмарта илме тĕллев лартнă.

**– Кăçалхи ĕç кăтартăвĕ еплерех?**

– Предприятин ĕç кăтартăвĕ япăх мар, 263680 пуç çамрăк чăх-чĕп, 21723 пуç çăмарта тăвакан чăх сутлăха ăсатнă. 148298867 штук çăмарта, 296196 кг чăх ашĕ, 41674 кг çăмарта порошокĕ туса кăларнă.

**– Ĕçлекенсен ĕç условийĕсене те лайăхлатса пыни курăнать.**

– Çапла, пирĕн коллектив – пирĕн пуянлăх. Ĕç условийĕсене те лайăхлатма тăрăшатпăр. Çĕнĕ столовăй хута ятăмăр, апатланмалли вырăн самай пысăк. Кухня халĕ çĕнĕ йышши, çĕнĕ оборудовани вырнаçтартăмăр. Çавăн пек ĕçлесе пырать пирĕн предприяти.

**– Владимир Николаевич, эпĕ сире иртнĕ уявпа – Ял хуçалăхĕн тата продукци тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕпе – тата хамăр округра пулакан Тыр-пул уявĕпе саламлатăп. Малашне те тухăçлă ĕçлеме ăнăçу сунатăп.**

Роза ИЛЛАРИОНОВА
калаçнă.










Педагогпа наставник çулталăкĕ

# Манăн анне – манăн наставник



«Учитель» сăмаха асăнсан чунра темĕнле пăлхану туйăмĕ палăрать. Тепĕр тесен ку сăмахра нимех те çук темелле. Çапах та куç умне пурнăçри конкретлă çын сăнарĕ тухса тăрать. Çыннăн пурнăçĕнче наставник, учитель нумай пулма пултарать, çапах та ĕç никĕсне вĕрентни мар, пурăнма ăс-тăн пани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ун пек çын кашнин пур.

Манăн наставник – манăн анне. Çук, ашшĕ-амăшне юратнăран каланă сăмах мар ку. Манăн анне чăннипех те пултаруллă та тăрăшуллă педагог, вăл ĕç ĕмĕрне вĕренӳ сферине халалланă. Пирĕн историе пуçламăшĕнченех каласа кăтартсан ытлашши пулмĕ. Манăн анне – Нина Николаевна Замятина. Вăл 1960 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче Муркашра çуралнă.

Мĕншĕн-ха анне учитель пулма шухăшланă; Вăл каланă тăрăх, ача чухне врач тата учитель профессийĕсем пирки кăна пĕлнĕ. Çавăнпа пулас професси пирки ыйтсан вăл тӳрех ним шухăшламасăр учитель пуласси пирки каланă.

Вăхăт иртнĕ, вăл 4-мĕш класа вĕренсе çитнĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче пĕррехинче хăйсен тăванĕ патне кайнă, унта акăлчан иероглифлă кивĕ кĕнеке тупнă. Кивĕ сунтăкăн çивиттине илнĕ те унта акăлчанла пĕрремĕш сас паллисем çырма хăтланнă вăл. Тен вĕсене ун чухне хальхи пек те çырман пулĕ. Çакăнтан пуçланнă та пулĕ аннен учитель пуласси.

5-мĕш класра акăлчан урокне вĕренме тытăннă. Анна Николаевна учитель акăлчан чĕлхине вăйă мелĕпе вĕрентнĕ. Часах çамрăк учитель хулана пурăнма куçнă, ун вырăнне Тамара Анатольевна вĕрентме тытăннă. Ырă кăмăллă, пысăк опытлă педагог аннешĕн чăн педагог эталонĕ пулса тăнă.

10 класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн анне И. Яковлев ячĕллĕ педагогика институтне ют çĕршыв чĕлхисен факультетне вĕренме кĕнĕ. Çапла унăн хăй тĕллĕнхи пурнăçĕ пуçланнă. Пилĕк çул ăнăçлă вĕреннĕ хыççăн 1982 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче ăна Якаткасси шкулне ĕçлеме кайма направлени панă. Ăна тӳрех 5 класс ачисене ертсе пыма тата аслă вожатăй пулма шаннă.

Ачасем Нина Николаевнăна малтанхи вăхăтранах кăмăлласа йышăннă. Вăл акăлчан чĕлхипе класс тулашĕнчи ĕçсене йĕркеленĕ, сăвăсемпе юрăсем, каларăшсем вĕреннĕ, сывăхри ялсене концертпа тухса çӳренĕ.

Çамрăк педагог çакăнтах манăн аттепе паллашнă, 1985 çулта вĕсем çемье çавăрнă. 1989 – 2000 çулсенче çав шкулта анне вĕренӳпе воспитани енĕпе директор çумĕ пулса ĕçлерĕ. Хыççăн вара ăна Чуманкасси шкулне куçарчĕç. Учитель должноçĕнче вăл 41 çул ытла ĕçлерĕ. Анне хăйĕн пĕлĕвне, энергине, чун ăшшине кашни ачана парассишĕн чунтан тăрăшрĕ. Ачасемпе анне хушшинчи килĕшӳ эпĕ яланах куратăп. Вăл ĕçчен, ăсталăхĕ пысăк пулнипе, ачасене юратнипе палăрса тăрать, кашни ача шăпишĕн пăшăрханать. Анне ачасен çитĕнĕвĕшĕн савăнать. Унăн вĕренекенĕсем те ăна ăшă туйăмпа тав тăваççĕ.

Ахальтен мар пулĕ шкултан вĕренсе тухнă ачасем ун патне шкула пырса çӳрерĕç, киле хăнана пыраççĕ, хăйсен савăнăçĕпе йывăрлăхĕ пирки каласа кăтартаççĕ. Анне ачасемшĕн савăннине куратăп, шкултан вĕренсе тухнă ачасен пурнăçĕпе кăсăкланса тăрать.

Манăн анне – Нина Замятина – пысăк сас паллилĕ учитель. Çакна вăл тивĕçнĕ чылай ят-сум çирĕплетет. Хастар педагог Раççей Федерацийĕн Çут ĕç министерствин, Чăваш Республикин Вĕренӳ, наукăпа аслă шкул министерствин тата районти вĕренӳ пайĕн Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене тивĕçрĕ, пурне асăнса та пĕтереймĕн. Унăн ĕçне чăннипех те çӳллĕ шая хурса хакларĕç. 2007 çулта вăл класс ертӳçисен районти конкурсĕнче «Опыт и мастерство» номинацире çĕнтерчĕ.

Анне ĕçне курса эпĕ те ун пекех пысăк çитĕнӳсем тăвас ĕмĕтпе пурăнтăм. Манăн ачалăх унпа юнашар иртрĕ. Кĕçĕн çулсенчех унăн урокĕсенче ларттăм, хĕр ача чухнех эпĕ учитель профессине суйласа илтĕм. Манăн ĕмĕт пурнăçланчĕ.

2002 çулта 11 класс вĕренсе пĕтерсен И. Яковлев ячĕллĕ университета вĕренме кĕтĕм. 2008 çулта вĕренсе пĕтерсен «Учитель начальных классов и иностранного языка» квалификацине илтĕм, педагогика тата пуçламăш вĕренĕвĕн методикин, çавăн пекех ют чĕлхе енĕпе хушма специальноçне илтĕм.

Педагогика ĕçне тăван Чуманкасси шкулĕнче пуçларăм. Астăватăп-ха эпир пĕрле урока, класс тулашĕнчи ĕçсене хатĕрленнине, сăвăсемпе юрăсем вĕренеттĕмĕр. Çак самантсене эпĕ халĕ савăнса аса илетĕп. Мĕнле интереслĕччĕ ун чух. Усă уроксем ирттереттĕмĕр, хыççăн хамăр ĕçе тишкереттĕмĕр, класс тулашĕнчи ĕçсен сценарине тăваттăмăр. Кăсăклă самантсене творчество тетрачĕ çине çыраттăмăр.

Нина Николаевна пĕлӳ кăна памастчĕ мана, пурнăçăн кăткăс условийĕнче те çĕнтерме вĕрентетчĕ. Эпĕ вăл кирек епле лару-тăрура та пулăшасса, лăпкăн итленĕ хыççăн тепĕр чухне хавхалантарса илессе пĕлсе тăратăп. Йывăрлăхра алă усмалла маррине, кирек епле ыйтăва та татса пама май пуррине шăпах та вăл ăнланса илме май пачĕ мана.

Нина Николаевна наставникăн тăрăшулăхне эпĕ халăхсем хушшинчи, пĕтĕм Раççей тата муниципалитет шайĕсенчи мероприятисене хутшăнса призлă вырăнсене йышăнни çирĕплетет. Анне анлă тавракурăмĕпе, ăсталăхĕпе, чунчĕре пуянлăхĕпе маншăн яланах ырă тĕслĕхре. Аслă педагогсем каланă тăрăх, ача вăл йĕпе цемент евĕр, унта мĕн лекет, хăй хыççăн йĕр хăварать. Манăн педагог ĕçĕ ачасенче ыр кăмăллăхпа пурнăçа юратассин çирĕп йĕрне хăварасса шанас килет.

Лайăх педагог хăй вĕренет тата аталанать. Çавăнта та эпĕ яланах вĕренме тăрăшатăп, йăнăшни, такăнни пулать, çапах та эпĕ ӳкместĕп. Çакăнта мана атте-анне, ачасемпе ĕçтешсем пулăшса пыраççĕ. Кирек епле пуçарура та хамăн çемьепе сывăх çынсен тĕрекне туйса тăратăп.

Пирĕн çемьен педагогика ĕçĕнчи стаж 55 çулпа танлашать. Замятинсемпе Александровсен учитель династине пирĕн ачасемпе мăнуксем малалла тăсасса шанас килет.

Пурнăç малаллах пырать, çулсем кайнăçемĕн кĕмĕл тĕслĕ çӳç пĕрчи те нумайланса пырать, чун-чĕре вара унчченхи пекех çамрăк юлать. Пирĕн хаклă çынсем нумай-нумай çул савăнтарса, чун ăшшине парса пурăнччăр.

**Маргарита АЛЕКСАНДРОВА,**
**Ярапайкасси шкулĕн вĕрентекенĕ.**

Октябрĕн 15-мĕшĕ – Халăхсем хушшинчи шурă туя кунĕ

# Шурă туя – пĕр утăм маларах пыракан пулăшуçă

Мĕн авалтанпах, çын çĕр çине килнĕ вăхăтранпах, ăна тĕрлĕ чир хавшатнă. Паллах, куç чирĕсем те, вăл шутра куç суккăрлăхĕ те çавăн чухнех пулнă. Çын суккăр тесе ĕмĕрĕпех çĕр хăвăлĕнче кăвайт умĕнче лараймасть вĕт тата тăватă уран уленсе çула алăпа хыпаласа та пыраймасть. Куç курман авалхи çынна юлташĕсем çирĕп те вăрăм шĕвĕр патак – дрын – илсе килсе панă. Унпа суккăр çыннăн мамонт çине сунара тухмалла пулнă, чĕрĕ юлсан вăл аш татăкĕ ĕçлесе илнĕ. Тен ку кулăшла пек те туйăнать пулĕ, çапах та кунта чăнни те пурах.

Çав вăхăтранпа çын çав хатĕре хăйне валли ĕç хатĕрĕ е пулăшу тĕлĕшпе ăна çинçерех туса усă курма тытăннă. Тăршшĕне, паллах, хăйĕн кĕлетке виçине кура татнă. Çапла вăл çынран пĕр утăм маларах пыракан туя пулса тăнă. Ăна эпир трость теттĕр, вăл – куç курман çыннăн чăн пулăшуçи.

Авал Бристоль хулинче Джеймс Биггс çамрăк фотограф пурăннă. Пĕр инкек хыççăн вăл суккăрланса юлнă. Пурнăçа унăн çĕнĕрен пуçламалла пулнă, алла туя тытса утма тытăннă. Анчах та иртен-çӳренсем, водительсем ун çине тимлĕх уйăрман. Çавăнпа та вăл хура тĕслĕ туяна шурăпа сăрланă.Часах ăна пурте асăрхама тытăннă. Çакă нумайăшне килĕшнĕ, куçсăр çынна усă курма шурă тĕсех хăварнă. Çавăн хыççăн пĕтĕм тĕнчипех куç курман çыннăн туйи шурă тĕслĕ пулса тăнă. 1950 – 60 çулсенче инвалидсен ыйтăвĕсем çине тимлĕх ытларах уйăрма пуçланă. Тĕнче шайĕнче Халăхсем хушшинчи шурă туя кунне 1970 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче çирĕплетнĕ. Çак ырă пуçару çумне Куç курманнисен пĕтĕм Раççейри организацийĕ 1987 çулта хутшăннă. Асăннă кунăн тĕп ăнлавĕ «толерантность, равноправие, интеграция» сăмахсем.

Хальхи туяна авалхипе танлаштараймăн, халĕ вăл усă курма меллĕ, çăмăл тата çирĕп. Шурă туя мĕн тĕрли кăна çук пулĕ: пĕр чăсăмли, хуçлатмалли, пластикран, дюральтен туни тата ытти тĕрли. Куç курман çын туйине Канадăра, Швецинче, Чехинче, ытти çĕршывра та кăлараççĕ. Вĕсенчен Раççей те аякра юлмасть. Чылайăшĕ вара Алтай тăрăхĕнчи Бийск хулинче туса кăларнине кăмăллать. Хуçланманскер, пластикран тунăскер, çăмăл, çын тăрушĕне кура суйлама пулать.

Мĕнле-ха куç курман çын туясăр çӳреме пултарĕ? Шурă туя пирĕн куçа ылмаштарнинех пулать. Çул тăрăх вăраххăн утатăп та унăн шĕвĕр пуçĕ пĕр утăм маларах шаклаттарса пырать, умри çул мĕнлине тĕрĕслет. Шăтăк – чарăнатăн, муклашка пулсан – чарăнатăн. Çапла тăрăнса каяс мар тесе умри çула тĕрĕслесе пырса эпир хамăра шанчăклă туятпăр.

Пирĕн Чăваш Енте куç курман 2300 ытла çын пурăнать, Муркашри пуçламăш организацинче 151 çын, вăл шута Элĕк округĕ те кĕрет. Чылайăшĕшĕн шурă туя – шанчăклă пулăшуçă. Япăхрах куракан çын хăй тĕллĕн те утма пултарать, пачах курманни – шурă туясăр ниепле те.

Ман аллăмра шурă туя 20 çула яхăн, нимĕнпе те улăштарма çук юлташ. Эпĕ ăна çепĕççĕн манăн виççĕмĕш куç тетĕп. Мана вăл кӳрентермен, хăйĕн тивĕçне тĕрĕс пурнăçлать, тепĕр чухне хам тимсĕрлĕхе пула çул çухатнипе кăна йăнăшни пулнă.

2004 çулта Куç курманнисен Волоколамскри реабилитаци центрĕнче вĕренӳре пулнă хыççăн шурă туя пĕлтерĕшне эпĕ ытларах туйма пуçларăм. Тĕрĕссипе каласан вара пачах пĕлмен вырăнта ун çине туллин шанма май çукрах, унта пирĕн пек çынсемпе юнашар куç куракан çынах кирлĕ.

Пĕр суймасăр калатăп, ырă çынсен пур çĕрте те пур, вĕсем ялан юнашар. Çул урлă каçма, кирлĕ транспорта ларма, тĕрĕс çĕре кĕме тата ытти ĕçре пулăшаççĕ вĕсем. Эпир, куç курман çынсем, пире пулăшакансене тав тăватпăр.

Тепĕр чухне вара кăшт пăшăрханмалли те пулать. Эпĕ çул çинче çухалса кайса тăратăп, мана хирĕç çын килет. Вăл мана сылтăмалла пăрăнма хушать, унталла утăмлатăп та чăрмав умне пырса тухатăп, вăл мана каллех сасă хăпартса калать. Кăштах ăнланманлăх палăрать, эпĕ унпа хирĕç утатăп, сылтăм алли вара ман сулахай енче. Тепĕр чухне тӳрĕ утма хушаççĕ, куç курман çын бордюр, стена е карта çумĕпе пыма тăрăшать, вĕсене ориентир вырăнне шута илет. Куç куракан çын çула урăхларах курать, суккăрри вара вĕсем каланă тăрăх пăтранса каять. Юрĕ-ха, ку темех мар.

Çапах та манăн пĕчĕк сĕнӳ пур. Куç курман çын хăйĕн шурă туйипе çул тăрăх шанчăклăн шакăртаттарса пырать пулсан, вăл хăйĕн маршрутне пĕлет. Апла пулсан ăна кансĕрлеме кирлех мар. Енчен те вăл йĕри-тавра туйипе çул шыраса шакăртаттарса тăрать пулсан вара сирĕн пулăшу вырăнлă пулĕ. Шурă туя кунĕ савăнăçлă уявах мар, çапах та пирĕн уяв. Самантпа усă курса эпĕ пире пулăшакансене, вулакансене, саламлакансене чунтан тав тăватăп.

**Вячеслав ПАГЕЕВ.**
**Хунтăкасси ялĕ.**

# Пурнăç уттипе тан пыма

Октябрĕн 4-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Лев Толстой ячĕллĕ ятарлă библиотекăра пĕтĕм Раççейри «Словом и жестом» конкурсăн регионти тапхăрĕ иртрĕ. Унта куç курман 1 ушкăнри инвалидсем хутшăнчĕç. Вĕсем хальхи йышши смартфонсен цифра сервисĕсемпе тата мобильлĕ хушăмсемпе усă курма пĕлнине тĕрĕслерĕç.

Конкурс Чул хула облаçĕнчи куç курман инвалидсен «Камерата» реабилитаци центрĕ йĕркеленипе, «МегаФон» ПАО пулăшнипе иртрĕ. Социаллă проекта Алишер Усмановăн пур кăмăллăх фончĕн тӳпи те пысăк. Çак ĕçе куç курман инвалидсен информаци технологийĕнчи пĕлĕвĕпе ăсталăхне ӳстерес тĕлĕшпе йĕркеленĕ. Мероприятие асăннă библиотека ертӳçи Наталия Перевезенцева уçрĕ.

– Конкурс вăл – хумхану, хавхалану, творчество азарчĕ. Конкурс вăл – çĕнелле улăхма май паракан утăм, çĕнĕ ăсталăх, çĕнĕ шухăш парнелет, – терĕ ертӳçĕ конкурса хутшăнакансене ăнăçу сунса.

Конкурсăн республикăри тапхăрне 12 çын хутшăнчĕ, вăл шутра район хаçачĕн тусĕ, Ильинка тăрăхĕнчи Вячеслав Пагеев. Конкурса хутшăнакансем 2023 çулта библиотекăн куç курман специалисчĕн Николай Парахинăн курсĕнче вĕренсе тухнă çынсем, çак специалист – регионти тифло-ИТ тренер.

Конкурса хутшăнакансен ĕçĕ çапла пулчĕ: телефон çинчи ятарлă хушăмпа усă курса пĕлтерӳ çырса ямалла, сасă ассистенчĕпе, файл менеджерĕпе, WhatsApp тата Shazam хушăмсемпе усă курма пĕлмелле, Интернет сыхăнăвĕпе ĕçлемелле. Хăш-пĕр ĕçре Вячеслав Пагеевăн та кăтартăвĕ лайăх пулчĕ. Тупăшура вара çĕнтерни мар, унта хутшăнни, пĕр-пĕрин ăсталăхĕпе паллашни, çын умне тухни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

– Çавăн пек мероприятисене тухса çӳрес килет, чĕнсен савăнатпăр кăна. Çĕннине нумай пĕлме пулать, килте анчах ларсан нимĕн те пулмасть. Çынсенчен вĕренетпĕр, хамăр мĕн пĕлнине ыттисене кăтартатпăр. Тепĕр чухне çынпа курса калаçни те лайăх.

Мана çавăн пек ĕçсене хутшăнма, тухса çӳреме хамăрăн вырăнти организаци ертӳçи Андриян Иванов нумай пулăшать. Çавăн пекех Муркашри ĕçсене тунă чухне те унран час-часах пулăшу ыйтма тивет. Вăл пире ăнланать, хирĕçлемест. Тавах ăна пирĕнпе ĕçленĕшĕн, пире пулăшнăшăн, – пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне Вячеслав Пагеев.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Округри ĕçчен çынсем

# Аслă пĕлӳллĕ механизатор

...Эпĕ хире çитнĕ чух тырăран пушаннă уйри шăплăха сирсе «хурçă ут» хăватлăн ĕçлесе ячĕ. Механизатор техника ĕçе хатĕррине вырăнтах тĕрĕслесе илчĕ. Пирĕн автомашина çитсе чарăннине курсан çамрăк арçын кабинăран тухса кăмăллăн пирĕн пата пырса сывлăх сунчĕ.

Эсир паянхи **сăн ӳкерчĕкре** инженер пĕлĕвĕллĕ механизатора Геннадий Шарапова куратăр. Çамрăк ĕмĕрне пĕтĕмпех техникăпа çыхăнтарнăскер производствăра мал туртăмлăхпа тата ăсталăхпа палăрса тăнине пĕрремĕш кун мар пĕлетĕп. Оринин территори пайĕнчи Çеменкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ çĕр ĕçченĕ пирки округ ертӳçисем те, республикăри Ял хуçалăх министерстви шайĕнче те, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен председателĕсемпе инженерĕсем те, хирте нумай çул тракторпа ĕçлекенсем те ырă енчен пĕлеççĕ. Аслă ăрури ăста механизаторсемпе инженерсен ĕçне малалла тăсаканĕ тесе хаклама пулать ăна паян.

Çĕр ĕçне юратасси Геннадий Феликсовичăн пĕр кунта çуралман. Хресчен ĕçне, инженер тăрăшулăхне вăл ачаран курса ӳснĕ. Çавăнпа çăкăр йывăç çинче ӳсменнине те манăн пĕлĕшĕм мĕн пĕчĕккĕллех ăша çирĕп хывнă. Ашшĕ – Феликс Порфирьевич – ĕç ĕмĕрне районти газ службинче ирттернĕ. Амăшĕ – Тамара Сергеевна – нумай çул Муркашри кирпĕч заводĕнче тăрăшнă. Туслă пурăннă мăшăр икĕ ывăлне те мĕн ачаран ĕçпе – ытларах техникăпа – туслаштарнă.

– Атте газ службинче тăрăшатчĕ. Ĕçрен таврăнсан аннепе калаçнă чух час-часах вăл е ку технологие çĕнетесси, çĕнĕ техника пĕлтерĕшĕ пирки сăмахланине илтеттĕм. Çавăнпа инженер тата механизатор пулас шухăш ачаллах çуралчĕ. Пурăна киле вăл техникăна юратассине çаврăнчĕ, пурнăç çулне усрĕ, – кăмăллăн калаçрĕ Геннадий Феликсович.

Вăтам шкул пĕтерсе алла аттестат илсен, пурнăçне ялпах çыхăнтарас ĕмĕтлĕ каччă Шупашкарти ял хуçалăх академине суйласа илет. Кунта уншăн пĕр факультет кăна пулнă – «Ял хуçалăхне механизацилесси». 1995 – 2000 çулсем хăвăрт иртсе каяççĕ. Вĕренӳ интереслĕ, çĕнни нумай, ĕç практики кăсăклă. Ĕç практики тенĕрен. Студент практикăра икĕ çул «Моргаушагропромхими» предприятире пулать, çĕр ĕçĕпе тата хăватлă техникăпа çывăх паллашать. «Предприяти ертӳçи Владислав Пушкин мана диплом илсенех хăйсем патне ĕçе чĕннине ĕнерхи пекех астăватăп. Хирĕçлемерĕм, хула пурнăçне суйламарăм, тăван района килсе ĕçе вырнаçрăм. Кунти тĕп инженер Николай Тихонов маншăн ĕç пурнăçĕнчи учитель пулчĕ. Çамрăк инженер-технолога тĕрлĕ сĕнӳ паратчĕ вăл, ĕç вăрттăнлăхĕсене алла илме пулăшатчĕ, механизаторсемпе тата техникăпа туслă пулма вĕрентетчĕ. Кунта ирттернĕ 7 çул ман пурнăçăн йĕркине çирĕплетрĕ», – аса илчĕ производствăри малтанхи уроксене ĕç тиркемен арçын.

«Моргаушагропромхими» предприятире вăл çулсенче ял хуçалăхĕнче усă куракан хăватлă техника ĕçленĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче минераллă тата органика удобренийĕ хывакан техникăна юсавлă пăхса тăрасси пысăк тимлĕх ыйтнă. Çу каçа кун сиктермесĕр ĕçленĕ ял хуçалăх техникин ĕмĕрне вăрăмлатасси ăна хĕллехи управа лартнипе çыхăнни те куç умĕнче пулнă. Ĕç коллективĕнче ку ыйту çине пысăк тимлĕх уйăрни çамрăк специалистшăн хăйне евĕр çĕнĕлĕх пулса тăнă. Хамăр калаçура Геннадий Феликсович паян та уншăн савăннине палăртрĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл ĕç ĕмĕрĕн пуçламăш утăмĕсем уншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине те пытармарĕ.



Предприяти хупăнсан çамрăк инженер пĕр хушă тĕрлĕ тиев турттарассипе тăрăшнă. Анчах кăшт вăхăт иртсен çĕр-аннемĕр ăна каллех хăй патне чĕннĕ. Округра «Путь Ильича» агрофирма уçăлсан, унăн ĕç тăвакан директорĕ Валерий Вязов ĕç опычĕ пухма ĕлкĕрнĕ çамрăк специалиста хăй патне чĕнсе илет. Çĕнĕ агрофирмăра йăлт çĕнĕ техника пулнă. Вĕсемпе тухăçлă ĕçлес тесен техникăна кĕске тата вăрăм вăхăта управа лартасси çине те пысăк тимлĕх уйăрма тивнĕ. Геннадий Феликсович çак ĕçе кун йĕркинче малти вырăна кăларать. Çапла вара ял хуçалăх техникине ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн управа лартассипе агрофирма округра 5 çул çĕнтерӳçĕ пулать, республикăри конкурсра 3 çул 2-мĕш вырăна тухать. Çак çулсенче агрофирмăна тĕрĕслевпе пĕрре мар Патшалăх техника надзорĕн Чăваш Республикинчи инспекцийĕн пуçлăхĕ Владимир Димитриев килнĕ. Вăл кашнинчех унăн тăрăшулăхне ырă енчен палăртни специалистăн хастарлăхне ӳстернĕ. Çапла вара агрофирмăри техника управĕ куç умĕнчех çĕнĕ шая çĕкленнĕ. Ĕç йĕркелĕвĕн çак ӳсĕмĕнче Геннадий Феликсович хăй яланах аслă ӳсĕмри инженерсен ĕç опычĕпе паллашни вырăнлă пулнине палăртрĕ. «Ударник» хуçалăхăн тĕп инженерĕ Николай Николаев, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра техникăшăн яваплă пулнă Иван Морозов, «Оринино» хуçалăхри Юрий Смелов, «Свобода» хуçалăхри Геннадий Кожевников, «Герой» хуçалăхри Валерий Леонтьев çав вăхăтра çамрăк инженершăн чăн-чăн вĕрентекенсем пулса тăнă.

«Путь Ильича» агрофирмăра ĕçленĕ хыççăн 2016 çултан тытăнса манăн пĕлĕшĕм «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕнче тăрăшать. Хăйĕн ĕçĕн тĕп никĕсĕнче вăл кооператив ертӳçисене техника туянма канашсемпе пулăшассине, ытти механизаторсемпе пĕрле унпа ĕçлессине тата вăхăтра юсассине, ĕç вĕçленсен техникăна ГОСТпа килĕшӳллĕн управа лартассине курать, ăна çуллĕ шайра пурнăçласа пырать.

Геннадий Феликсович инженер тесе трактор штурвалĕ умне ларассинчен те нихăçан пăрăнман. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче ăна яланах уй-хирте курма пулать. Акă кăçал та вăл хăйне çирĕплетсе панă К-744Р2 «Кировец» тракторпа тата КПУ-8 культиваторпа, ДМ-8-2ПС дискаторпа «Ударник» хуçалăхра çур аки валли ытлă-çитлĕ çĕр хатĕрленĕ. Ун хыççăн асăннă хуçалăх арендăна илнĕ «Передовик» кооперативăн çум курăкĕ айĕнче выртакан çĕрĕсене 1600 гектар пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Механизатор ĕçленине кура вăл шутран 1301 гектарĕ çинче «Ударник хуçалăх кĕрхи культурăсем акса хăварма та ĕлкĕрнĕ.

Кăçалхи кĕр кунĕсем тирпейлĕ пулнипе усă курса паянхи сăн ӳкерчĕке тунă чух «Передовик» хуçалăхра юлашки гектара дискланă механизатор каялла «Ударник» хуçалăха таврăнма пуçтарăннине пĕлтерчĕ. Тĕллевĕ – кунта кукуруза анине хура кĕр пуçланиччен çур аки валли дисклаcа хăвармалла. Хыççăн вара кун йĕркинче техникăна управа лартасси пулнине пĕлтерчĕ аслă пĕлӳллĕ инженер-механизатор. Сăмах май, Геннадий Феликсович хĕл кунĕсем валли те ĕç çителĕклине палăртрĕ. Сивĕ вăхăтри тĕп тăрăшулăх – техникăна çур аки валли тирпейлĕ юсаса хатĕрлесси. Ăна валли хуçалăхра мастерскойсем хатĕр.

– Çур аки тата кĕр аки валли çĕр хатĕрлессине хăш-пĕр уйсене кăçал 4-шар хут та кĕме тиврĕ, çапла вара çум курăкне пуç çĕклеме памарăмăр. Хамăн тракторпа та çак ĕçсене хутшăнса пĕтĕмпе 5000 ытла гектар çинче ĕçлерĕм: акана хатĕрлерĕм тата хура пусă турăм. Паян хам ĕçленĕ уйсенче кĕрхи культура калчи ешернине курсан чун савăнать. Апла пулсан çитес çул та тыр-пул тухăçĕ пĕчĕк пулмĕ. Ку – çĕр ĕçченĕн малашлăхĕ, – терĕ ял хуçалăх аталанăвĕ тата çĕр ĕç техники çинчен шутлакан арçын. Кунта хирĕçлесе е хушса нимех те калама çук тесе шутлатăп.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Октябрĕн 15-мĕшĕ – Атте кунĕ

# Аттесене тав тума манар мар



Çемьере килĕшӳ хуçалансан, ача-пăча сасси пӳртре янăрасан, таса сывă пулсан, мирлĕ тӳпере сарă хĕвел ăшăтса пăхсан, çыннăн телейĕ чăн та туллин туйăнать. Аттене мĕн авалтан çемье пуçĕ, çирĕп хӳтĕлĕх тенĕ, хĕрарăм вара кил-çурт ăшшине упраканĕ пулнă.

Октябрĕн 15-мĕшĕ Атте кунĕ пулнипе паллă, тепĕр уйăхра вара аннесене чыслăпăр. Аттесен уявĕ çамрăк-ха, анчах та унăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Çак куна октябрĕн виççĕмĕш вырсарникунĕнче паллă тума йышăннă. Ăна эпир виççĕмĕш хут кăна паллă тăватпăр.

Çапах та истори страницине уçса пăхсан ытлашши пулмĕ. 1910 çулхи çу кунĕнче Америкăри çамрăк пĕр хĕрарăм аттесен уявне паллă тума сĕннĕ. Унăн амăшĕ çамрăкла вилнĕ, ашшĕ вара Уильям Смарт хăйĕн ферминче ултă ача пăхса ӳстернĕ, пĕри тин кăна çуралнă ача пулнă. Çак пуçарăва унта 1966 çулта кăна çирĕплетнĕ. Раççейре вара Аттесен кунне 2000-мĕш çулсенче унта-кунта паллă тума тытăннă, тепĕр виçĕ çултан – пур çĕрте те.

Аттесене мĕнле савăнтармалла-ха? Паллах, çĕнĕ куна ăшă сăмахран пуçламалла, сывлăхпа ăнăçу сунмалла. Енчен те атте аякра пулсан, шăнкăравласа тав туни пачах та ытлашши пулмĕ. Пирĕнтен уйрăлса кайнисене ырăпа аса илер. Пĕчĕк кăна парне те атте чунне çемçетме пултарать. Вăрттăнлăх мар, аттесемĕн çак куна тутлă кану кунĕ туса парсан тата сенкер экран умĕнче киленсе выртма май парсан вĕсем ытларах та савăнĕç.

**Сăн ӳкерчĕкре** эсир Турай тăрăхĕнчи Çуткӳлти çамрăк çемьене куратăр. Çемье пуçĕ Алексей Портнов вара хăйĕн кил-йышĕ çумра пулнишĕн савăнать. Вăл мăшăрĕшĕн – чăн тĕрек, ăнланакан тата пулăшакан арçын, ачисемшĕн, паллах, çирĕп хӳтĕлĕх. Мăшăрĕ Настя каланă тăрăх, вăл пассажирсене турттарать, ачасем ашшĕне питĕ юратаççĕ, ĕçрен таврăнасса тата вăхăта пурте пĕрле ирттерессе кĕтеççĕ. Çемье ĕçрен пушансан чăн та пĕрле пулма тăрăшать. Усăлма, канма тухса çӳреççĕ вĕсем.

Ачасем халĕ пĕчĕк-ха. Николай икĕ çулта, Мария – пиллĕкре. Вĕсем иккĕшĕ те ача садне çӳреççĕ.

Ачасен амăшĕ вара повар, пекарньăра ĕçлет. Вăл – паллах, тутлă çимĕç ăсти. Атте уявне вăл питĕ тутлă туса пама шантарчĕ.

Кăçалхи çул çамрăк çемье «Обеспечение доступным и комфортным жильем и коммунальными услугами граждан РФ» социаллă программăн патшалăх пулăшăвĕпе усă курма пултарчĕ.

– Чăн та эпир питĕ савăнтăмăр, патшалăх çемьесене пулăшать. Пирĕн çемье 700 пин ытла тенкĕне тивĕçрĕ. Ку пирĕншĕн курăмлă пулăшу пулчĕ. Ытти пайне хамăр хушса Çĕнĕ Шупашкарта виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер туянтăмăр. Паллах, питĕ меллĕ, чуна килĕшет. Кашнин валли вырăн пур, ачасене чупмалăх та, вылямалăх та. Черет çитессе нумай кĕтмерĕмĕр, пĕр çул çурă таврăшĕнче пулчĕ пулĕ, – терĕ мăшăр савăнăçлăн.

Çамрăк çемьене вара çĕнĕ хваттерте ăнăçу сунас килет.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Уявран

# Тавах сире, учительсем!





Учитель кирек камăн пурнăçĕнче те паллă вырăн йышăнать. Шăпах вăл пире тарăн пĕлӳ, тивĕçлĕ воспитани парса пурнăçăн анлă çулĕ çине тухма пулăшать. Тăван шкул, пĕрремĕш учитель, ачасемшĕн чунĕсемпе çунса тăракан педагогсем нихăçан та асран тухмаççĕ. Çавна май вĕсене тав сăмахĕ калассипе, уявсемпе саламласси, чысласси ырă йăлара.

Октябрĕн 5-мĕшĕ – Учитель кунĕ. Вĕрентекен кунне халалланă савăнăçлă мероприяти те округра çав кун иртрĕ. Вренту ĕçченĕсем, педагогика ĕçĕн ветеранĕсем професси кунне уявлама кăçал Мăн Сĕнтĕр шкулне пухăнчĕç.

«Учитель пуласси вăл – Турă пани пекех. Эсир ырми-канми тăрăшнипе ачасем пахалăхлă пĕлӳ кăна мар, çавăн пекех ăс-хакăлпа нравственноç воспитанийĕ те илме пултараççĕ. Эсир пирĕн çĕршыв малашлăхне çитĕнтеретĕр. Пархатарлă ĕçĕршĕн, ачасене тата хăвăр професси юратнăшăн пысăк тав сире», – çак сăмахсемпе саламларĕ уяв мероприятине пухăннă педагогсене Чăваш Республикин гражданла оброна тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕн çумĕ Александр Степанов. Çавăн пекех вăл педагогика ĕçĕн ветеранĕсене уйрăммăн тав туса саламларĕ.

Чи пултаруллисене вара Александр Степанов Раççей Федерацийĕн Çут ĕç министерствин Хисеп грамотине парса чысларĕ. Сумлă наградăна тивĕç пулнисем – округ администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ертсе пыракан эксперт специалисчĕ Алина Димитриева, Калайкасси тата Шурча шкулĕсен директорĕсем Татьяна Ершовăпа Лира Кудашова, Москакасси тата Юнкă шкулĕсен вырăс чĕлхипе литературин учителĕсем Алина Парандеевăпа Маргарита Сытина, Муркаш шкулĕн директорĕн воспитани тата ачасен общественнăй пĕрлешĕвĕсемпе çыхăнса ĕçлессин советникĕ Эльвира Яковлева.

Шурча шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ Светлана Дмитриева вара кăкăр çине çакмалли Г.Н. Волков ячĕллĕ «За достижения в педагогике» паллăна, округ администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине тивĕçрĕç.

Пухăннисене професси уявĕпе депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн председателĕ, «Единая Россия» партин Муркаш уйрăмĕн секретарĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Александр Иванов саламларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çавна палăртрĕ. Чăннипех те çĕр çинче учитель профессийĕнчен пĕлтерĕшлĕреххи çуках. Пирĕн ӳсĕмсенче тата çитĕнӳсенче вĕсен тӳпи те çук мар. Учитель кашни ачана хăйĕн юратăвне, чун ăшшине парнелет, унăн çитĕнĕвĕсемпе савăнать тата унпа пĕрлех кулянать. Александр Валерьевич учительсене хăйсен тивĕçне малашне çавăн пекех пурнăçласа пыма ăнăçу, сывлăх, телей сунчĕ.

Ăста та пултаруллă педагогсене вăл депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн Хисеп грамотине тата «Единая Россия» партин регион уйрăмĕн Тав çырăвне пачĕ.

Учительсене уявпа вĕренӳ ĕçченĕсен пĕтĕм Раççей профсоюзĕн Чăваш Республикинчи организацийĕн тĕп право ĕç инспекторĕ Людмила Шушпанова чĕререн саламларĕ, Зоя Дипломатовăна вĕренӳ ĕçченĕсен пĕтĕм Раççей профсоюзĕн Чăваш Республикинчи организацийĕн Хисеп грамотине пачĕ.

Муркаш муниципалитет округ пуçлăхĕ Алексей Матросов ячĕпе тата хăйĕн ячĕпе педагогсене округ администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Зоя Дипломатова саламларĕ.

Зоя Юрьевна палăртнă тăрăх, учитель ĕçĕ чăннипех те хисеплĕ те чыслă. Ахальтен мар ĕнтĕ 2023 çула Раççейре Педагогпа наставник çулталăкĕ тесе йышăннă. Шкул тата учитель кашнин асăнчех ĕмĕрлĕхех юлаççĕ. Педагогсене тата çак ĕçĕн ветеранĕсене вăл нумай çул ырлăх-сывлăхпа пурăнма вăрăм ĕмĕр сунчĕ.

Округ шайĕнчи наградăсене тивĕçекенсем те çав кун сахал мар пулчĕç. Оринин шкулĕн истори тата обществознани учителĕ Валентина Алексеева тата пуçламăш классен учителĕ Светлана Вязова, Ярапайкасси шкулĕн акăлчан чĕлхи учителĕ Алина Горшкова, Муркаш шкулĕн пуçламăш классен учителĕсем Елена Налимова тата Ольга Клопова, Нискасси шкулĕн чăваш чĕлхипе литературин учителĕ Надежда Осипова, Йӳçкасси шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ Евгения Петрова, Мăн Хураçка шкулĕн математика учителĕ Римма Прокопьева, Ярапайкасси шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ Вера Родионова, Çатракасси шкулĕн математика учителĕ Любовь Савельева, Нискасси шкулĕн географи учителĕ Раиса Семенова, Оринин шкулĕн физика учителĕ Ирина Скворцова, Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн информаципе методика центрĕн методисчĕ Людмила Федорова Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн Хисеп грамотине тивĕçрĕç, Оринин шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учительне Валентина Калининăна Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн Тав çырăвĕпе чысларĕç.

Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн Хисеп грамотине илекенсем те сахаллăнах мар. Вĕсен шутĕнче Мăн Сĕнтĕр шкулĕн технологи учителĕ Ирина Александрова тата музыка учителĕ Илья Зайцев, Çатракасси шкулĕн пуçламăш классен учителĕ Надежда Иванова, Чуманкасси шкулĕн биологипе химин учителĕ Елена Кадыкова, Шетмĕпуç шкулĕн акăлчан чĕлхин учителĕ Раймира Магамедова, Шатракасси шкулĕн акăлчан чĕлхин учителĕ Светлана Яндушкина, педагогика ĕçĕн ветеранĕ Роза Иванова.

«Единая Россия» партин регион уйрăмĕн Тав çырăвне тивĕçнисем – Нискасси шкулĕн директорĕ Алексей Дмитриев, ачасен искусство шкулĕн директорĕ Ольга Григорьева, Ильинка шкулĕн музыка учителĕ Нина Чернова, депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн Хисеп грамотине тивĕçнисем – Муркаш шкулĕн директорĕн çумĕ Светлана Рожкова, Йӳçкасси шкулĕн чăваш чĕлхипе литературин учителĕ Светлана Степанова, Чуманкасси шкулĕн пуçламăш классен учителĕ Валентина Федорова.

Кунсăр пуçне çав кун 2022 – 2023 вĕренӳ çулĕн пĕтĕмлетĕвĕпе спортăн çарпа прикладной тĕсĕсем енĕпе малти вырăнсем йышăннă шкул коллективĕсене те чысларĕç, тĕрлĕрен конкурссен çĕнтерӳçисене, çемье династийĕсене палăртрĕç, учительсен ячĕпе нумай-нумай ырă сăмах каларĕç.

Шкул ачисем хăйсен вĕрентекенĕсене ташă-юрă парнелерĕç. «Расна» халăх ансамблĕ те пухăннисене илемлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарчĕ.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: Раççей тата республика шайĕнчи наградăсене тивĕçнисен ушкăнĕ; «Расна» халăх ансамблĕ илемлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарчĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкĕсем авторăн.**

Спорт

# Вĕренӳ çулне ăнăçлă пуçларĕç



***Хушма пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенче пĕлӳ илекен ачасем те çуллахи вăхăтра каннаççĕ – каникул. Муркашри «Сывлăх» спорт шкулĕн боксерĕсем кăçал çуллахи каникулта та канман иккен.***

***«Эпир ачасемпе тренировкăсем тăтăшах ирттертĕмĕр, канмарăмăр темелле. Çавăнпах пулĕ çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчи пĕрремĕш ăмăрту та пире савăнтарчĕ», – пĕлтерчĕç Сергей Черкашин тата Николай Багдасарян тренерсем (сăн ӳкерчĕкре воспитанникĕсемпе пĕрле).***

***Иртнĕ кунсенче Муркаш боксерĕсем Çĕрпӳ хулинче спорт ветеранĕсен Михаил Егорович тата Михаил Николаевич Красновсен ячĕпе ирттернĕ пĕтĕм Раççейри «Мужество» турнира хутшăннă.***

***Чăнах та, çамрăк боксерсем çулла тар тăкса ĕçленин кăтартăвĕ тренерсене те, çамрăксене хăйсене те савăнтарнă.***

***Тимур Николаев, Артемий тата Алексей Алексеевсем, Серафим Хораськин, Алексей Антонов – пурте хăйсен виçе категорийĕнче ăмăрту çĕнтерӳçисем пулса тăнă. Дмитрий Краснов бронза медале тивĕçнĕ.***

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

**Спорт**

# Ăмăрту 10-мӗш хут иртрӗ



***Октябрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн çӗршывра Ял хуçалăхӗнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ӗçлекен кунне паллă турӗç. Асăннă уяв умӗн, октябрӗн 7-мӗшӗнче, Муркашри «Сывлăх» спорт шкулӗнче Раççей Федерацийӗн ял хуçалăхӗн тава тивӗçлӗ ӗçченне, «Хисеп палли» орден кавалерне, Муркаш районӗн хисеплӗ гражданинне, 30 çул «Ударник» хуçалăха ертсе пынă Платон Давыдова асăнса куçса çӳрекен кубока çӗнсе илессишӗн волейбол турнирӗ иртрӗ.***

Спорт уявне савăнăçлă лару-тăрура Платон Павловичăн мăшăрӗ Светлана Александровна, ачисем Александр Платоновичпа Людмила Платоновна, мăнукӗсем хутшăннипе уçрӗç. Çавăн пекех унта хисеплӗ хăнасем, П.П. Давыдовпа тӗрлӗ çулсенче пӗрле ӗçленисем хутшăнчӗç.

Ăмăртăва хутшăнакансене округ администрацийӗн вӗренӳ пайӗн пуçлăхӗ Зоя Дипломатова саламларӗ, Платон Давыдов округри чи паллă çынсенчен пӗри пулнине, çитӗнекен ăрушăн вăл яланах тӗслӗх пулнине палăртрӗ.

«Пирӗн çемьешӗн асăннă ăмăрту питех те пысăк пӗлтерӗшлӗ. Унта хутшăнма кăмăл тунисене пысăк тав сăмахӗ калатпăр. Платон Павлович хăйӗн ӗçне чунтан юратнă, ачисемшӗн, мăнукӗсемшӗн яланах тăрăшнă. Паян вӗсем кунта. Ăна манманшăн, асрах тытнăшăн, хисепленишӗн тав сăмахӗ калатпăр», – терӗç ăмăртăва хутшăнакансене ăнăçу суннă май Александр Платоновичпа Людмила Платоновна.

Ăмăртăва хутшăнакансене çавăн пекех депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвӗн председателӗ Александр Иванов, АПК ветеранӗсен округри канашӗн председателӗ Валерий Вязов, Чăваш Республикинчи волейбол федерацийӗн председателӗ Юрий Кислов саламларӗç, ăмăртура çитӗнӳсем сунчӗç.

Кăçалхи ăмăрту 10-мӗш хут иртрӗ. Спорт шкулӗнче вăл çав кун 8 командăна пухрӗ. Кусем вӗсем «Моргаушская СОШ», «Газпром проектирование Нижний Новгород», «Моргауши», «МАОУ СОШ №61 «Ирбис», «Скала», «Спартак-Исаково», «Лава» тата Шупашкар округӗн команди. Командăсем хушшинчи ăмăртусем «Сывлăх» спорт шкулӗн тата Муркаш шкулӗн спортзалӗсенче иртрӗç.



Хӗрӳ кӗрешӳре пӗрремӗш вырăн тата куçса çӳрекен кубок «Лава» команда çӗнсе илме пултарчӗ. «Моргауши» команда иккӗмӗш тата «Скала» команда виççӗмӗш вырăн йышăнчӗç. Командăсен участникӗсем хушшинче вара çӗнтерӳçӗсене уйрăм номинацисенче палăртса чысларӗç.

Ачасен Муркашри искусство шкулӗн «Фантазия» хореографи ушкăнӗ хăйӗн номерӗсемпе савăнтарчӗ.

**Надежда СУВОРОВА.**

**Сăн ӳкерчӗксенче: ăмăртăва хутшăнакансене саламлаççӗ; тытăçусем çивӗч кӗрешӳре иртрӗç; «Моргауши» команда ăмăртура иккӗмӗш вырăн йышăнчӗ.**

**Сăн ӳкерчӗкӗсем авторăн.**




**Саламлатпăр**

Юратнă та хаклă çыннăмăра – Çатракасси ялӗнче пурăнакан **Галина Степановна ПАВЛОВĂНА** 75 çулхи юбилей ячӗпе ăшшăн саламлатпăр, тӗнчери мӗнпур ыррине сунатпăр сана: тулăх пурнăç, куç тулли телей те ăнăçу, çирӗп сывлăх. Мӗн шутланисем пурнăçланса пыччăр, кӗрекӳ ялан тулли пултăр.



**Ăшă салампа: ывăлӗ, кинӗсем, мăнукӗсем, тăванӗсем.**

Чи хаклă та юратнă аннене, асаннене, ырă кăмăллă тăвана – Çатракасси ялӗнче пурăнакан **Вера Павловна ШАРОВĂНА** юбилей ячӗпе чун-чӗререн ăшшăн саламлатпăр. Çирӗп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунатпăр, эс пурришӗн савăнатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпӗр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăвансемпе килӗштерсе пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр, чир-чӗртен сыхлатăр.



**Саламлаканӗсем: ывăлӗсем, кинӗсем, мăнукӗсем, хăти-тăхлачисем, тăванӗсем.**

Чи хаклă çыннăмăра, савнă мăшăра, юратнă аттене, ырă кăмăллă кукаçие, асаттене – Çӗньял Очăкасси ялӗнче пурăнакан **Владимир Григорьевич РОМАНОВА** çуралнă кунӗ ячӗпе чун-чӗререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленӗшӗн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришӗн савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Сывлăху санăн çирӗп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлӗ килтӗр.

**Саламлаканӗсем: мăшăрӗ, икӗ хӗрӗпе ывăлӗ, кӗрӳшӗсем, кинӗ, мăнукӗсем, çывăх тăванӗсем, хăти-тăхлачисем.**

Хамăр ветерансене – çар тивӗçне Совет çарӗсен Германири ушкăнӗнче 1983 – 1985 çулсенче пурнăçланă, паян ЧР «Россельхозцентр» филиалăн районти пайне ертсе пыракан **Александр Ильич ПАВЛОВА** тата Çӗн Чемейре пурăнакан, асăннă ушкăнра 1979 – 1981 çулсенче службăра тăнă **Виталий Михайлович АГАКОВА** – çуралнă кунӗсемпе ăшшăн саламлатпăр. Çирӗп сывлăх, вăрăм кун-çул, тикӗс çул, ӗçре ăнăçу, çемьере килӗшӳ сунатпăр. Ветерансен ӗçӗнче эсир малашне те ялан активлă пуласса шанатпăр.

**ГСВГ ветеранӗсен районти уйрăмӗ.**

Пирӗн ылтăн-кӗмӗлтен те хаклăрах аннене, юратнă асаннене – Çӗньял Оринин ялӗнче пурăнакан **Юлия Михайловна ВОЛКОВĂНА** 75 çулхи юбилей ячӗпе пур кăмăлтан ăшшăн саламлатпăр. Сана эпир чăваш юманӗ пек çирӗп сывлăх, чăваш сурпанӗ пек вăрăм ӗмӗр, телей, канлӗ ватлăх сунатпăр. Мӗн шутланисем яланах пурнăçланса пыччăр, кӗрекӳ ялан тулли пултăр. Ачусемпе, мăнукусемпе, çывăх çыннусемпе пӗрле савăнса пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр. Эпир сана хисеплетпӗр, чунтанах юрататпăр.



**Ăшă салампа: хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, ывăлӗпе кинӗ, мăнукӗсем.**

**ЯЛ ХУÇАЛĂХ ӖÇЧЕНӖСЕМ, ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Муркашсем ӗçлеме пултарнине тата вӗсен ӗçченлӗхне лайăх курса тăнăран паян уй-хирте, выльăх-чӗрлӗх отраслӗнче, продукци тирпейленӗ çӗрте ăнăçлă вăй хуракансене, ӗçре активлăхпа палăракансене тата округри АПК ветеранӗсене Тыр-пул уявӗпе ăшшăн саламлатăп, ӳсӗмлӗ ӗçлеме çирӗп сывлăх, вăрăм ӗмӗр сунатăп.

**АПК ветеранӗсен округри канашӗн ертӳçи В. ВЯЗОВ.**

Сывлăх

# Юн тымарĕшĕн мĕн сиенлĕ?

Юн тымарĕсен сывлăхне хавшатакан продуктсем те пур. Вĕсене çиессине май пур таран чакарас пулать. Кун пирки **медицина наукисен докторĕ, эндокринолог Зухра Павлова** хăйĕн Telegram-каналĕнче каласа панă.

Вăл палăртнă тăрăх, асăннă списокра пĕрремĕш вырăнта сахăр шутланать. Çав шутах пĕрре пăхма пачах сиенсĕр туйăнакан ырă шăршăллă тунă йогуртсем те кĕреççĕ. Шăпах ĕнтĕ вĕсене хăшĕ-пĕри ирхи «сывă» апатлану валли е çырткаласа илме туянать.

«Тĕрĕссипе çаксем вĕсем мороженăй е пирожнăй пекех десерт пулса тăраççĕ, нихăш енпе те ирхи усăллă апат мар», – каласа панă З. Павлова.

Газ напиткĕсенчен те сывлăхшăн усăлли нимех те çук. Вĕсенче сахăр ытлă-çитлĕ çеç мар, кунпа пĕрлех хăрушă сăрăсем те пур.

Кунсăр пуçне рационра шаритленĕ çуллă какай та куллен пулмалла мар. Эндокринолог асăннă тăрăх, çын кашни ирех беконпа апатланнине сывă апатланупа çыхăнтарма ниепле те май çук.

# Сыпăсенчен ытлашши тăвара кăларма

Пĕр стакан ряженкăна ыраш çăкăрĕнчен килте типĕтнĕ, тĕпретнĕ пĕр стакан сухарипе тата пĕр чей кашăкĕ апат содипе хутăштармалла. Çутăра 6 сехет лартмалла, вăхăт-вăхăт пăтратмалла. Сăрăхтармалла.

Çĕрине марльăпа ыратакан тĕле хумалла, полиэтиленпа витмелле, ăшă япалапа чĕркесе çыхмалла. Компреса темиçе сехет тытмалла. Юлнă шĕвекпе ура кĕллинчи шăмма (шпора) сăтăрни усăллă.

# Услам çу – ӳпке чирĕсенчен



**Раççей диетолог врачĕ, медицина наукисен докторĕ Марият Мухина** каласа панă тăрăх, услам çу шăнса пăсăлнисемшĕн тата ӳпке чирĕсемпе аптăракансемшĕн усăллă çимĕç пулса тăрать. Специалист çавна асăннă. Услам çу ӳпкене йĕркеллĕ ĕçлеме кирлĕ япала – сурфактант туса кăларма пулăшать.

«Сăмахран, çын шăнса чирлерĕ пулсан, бронх чирĕсене сиплеме халăх медицининче час-часах пылпа, çупа тата вĕри сĕтпе усă кураççĕ», – ăнлантарса панă специалист.

Кунсăр пуçне услам çура усăллă япаласем сахал мар. Вĕсен шутĕнче кальци, кали, фосфор, магни, А тата Д витаминсем. Калăпăр, кальци шăмăсене çирĕпрех тума тата юн кĕвелессине лайăхлатма кирлĕ, çавăн пекех вăл мышцăсене кĕскетет.

Çавна та асăннă. Тăварлă мар услам çăва кунне 30 грамран ытла мар çиес пулать.

# Вирус инфекцине мĕнле сиплемелле?

**Мускав облаçĕнчи 1-мĕш номерлĕ МЕДСИ клиника больницин тĕп врачĕ, терапевт врач, анестезиолог-реаниматолог, медицина наукисен докторĕ Татьяна Шаповаленко** çивĕч респиратор вирус инфекцийĕсенчен (ОРВИ) тата шăнса пăсăлнинчен сипленнĕ чухне тăвакан виçĕ йăнăш пирки каласа панă. Кусем вĕсем тĕрĕс мар апатланни, уçăлтарман пӳлĕмре пулни тата антибиотиксем йышăнни.

Специалист палăртнă тăрăх, респираторлă инфекципе аптăранă чухне çынсенчен нумайăшĕ пӳлĕме уçăлтарма тăрăшмасть, мĕншĕн тесен шăнса татах ытларах чирлеме пултарасран хăрать. Çапла вара сывлăшра вируссем пухăнса тулаççĕ, çын ытларах кăна мар, çавăн пекех тепĕр хут та чирлесе кайма пултарать. Кунсăр пуçне çӳлти сывлав çулĕсем шыçса тăртаннипе пула çыннăн гипокси туйăмĕ (кислород сахаллине пула сывлăш пĕтнĕ пек туйăнни) пулма пултарать. Çакă та сывалма чăрмав кӳрет.

Иккĕмĕш йăнăш тесе Т. Шаповаленко чирлĕ çын балансла апатланманнине асăннă. «Выçă пулни шăнса чирленĕ чухне усăллах мар. Мĕншĕн тесен пачах çиме пăрахсан çыннăн ацидоз (организм сӳрĕклĕхĕ) аталанать. Ку вара органсемпе тĕртĕмсем самай сиенленесси патне илсе çитерме пултарать», – тенĕ вăл.

Кунпа пĕрлех вăл çавна та астутарнă. Вирус чирĕсем чухне антибиотиксем пачах йышăнма юрамасть. Пĕрремĕшĕнчен, асăннă ушкăн препарачĕсем апат ирĕлтерекен системăна хавшатаççĕ. Кунсăр пуçне вара, кайрантарах организма бактери лекет пулсан (антибиотик шăпах унпа кĕрешме тивĕç), вăл ăна туйми пулать.

«Шăнса пăсăлнин пĕрремĕш паллисем пулсанах харпăр хăй тĕллĕн антибиотиксем йышăнма кирлĕ мар. Врач сĕнет пулсан çеç тата бактери инфекцийĕ ернине çирĕплетсен кăна çапла тума юрать», – палăртнă терапевт.

# Витаминсем пулăшаççĕ

Кĕркуннехи-хĕллехи вăхăтра ОРВИ тата грипп чирĕсемпе чирлекенсен шучĕ ӳсет. Харпăр хăйĕн организмне мĕнле сыхламалла тата чирлемелле мар? Кун пирки **Мускаври сывлăх сыхлав департаментĕнче** каласа панă.

Пĕрремĕшĕ – иммунитета çирĕплетĕр. Çакна тивĕçтермелли мелсенчен пĕри – организмра витаминсем çитменнине пĕтерни. Калăпăр, А витамин куç курассине лайăхлатать, ӳтĕн тата лăймакаллă сийсен сывлăхне пулăшать.

Асăннă витамин кишĕрте, кавăнра, пăрçа культурисенче, çĕр улминче, шпинатра, пĕверте, çăмартара, кĕрпесенче тата ытти çимĕçре пур.

С витамин иммун системине çирĕплетме пулăшать тата инфекцисенчен хӳтĕлет. Ку витамина цитрус çимĕçĕсенчен, кивирен, брокколирен тата ытти улма-çырлапа пахча çимĕçрен илме пулать.

Шăмăсен çирĕплĕхĕшĕн тата иммун системишĕн Д витамин пĕлтерĕшлĕ. Эпир ăна хĕвел пайăркисенчен илме пултаратпăр. Кунсăр пуçне çак витамин пулăсен çуллă сорчĕсенче тата сĕт продукчĕсенче пур.

Тĕрĕс апатланни те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Çавăн пекех спортпа туслă пулмалла, нумайрах куçса çӳремелле, сиенлĕ йăласенчен хăпмалла.

Кану та пĕлтерĕшлĕ. Кĕркунне организм çĕнĕ климат условийĕсене хăнăхма энерги пĕтерет. Вăй-хал активлăхĕпе пĕрлех кану та тулли пулмалла, лайăх çывăрса тăранмалла. Ыйхă режимне пăхăнмалла. Вăл çак тапхăрта 7 – 8 сехетрен кая ан пултăр.

Ансат чăнлăха та асрах тытас пулать – санитари хăрушсăрлăхĕ пирки манмалла мар.

# Чĕре сывă пултăр

Чĕре пĕр чарăнмасăр кашни кун ĕçлет, этем организмĕн мĕнпур органĕ патне юн çитерсе парать. Çавăнпа та унăн сывлăхĕ тĕлĕшпе яланах тимлĕ пулмалла, тĕрлĕ чире аталанма памалла мар. Чĕре тĕрĕс-тĕкел ĕçлесси мĕнрен килет-ха?

Кун пирки **терапевт врач, медицина наукисен кандидачĕ Андрей Кондрахин** каласа панă.

Вăл палăртнă тăрăх, чĕре сывлăхĕ икĕ фактортан килет. Вĕсем хушшинче:

– генетикăпа çыхăнни;

– çын хăй чирлени.

Генетика аспекчĕ – çыншăн чи пĕлтерĕшли. Пĕтĕм организм ĕçĕ 80 процент унран килет. Енчен çыннăн çывăх тăванĕсем хушшинче чĕрепе аптăракансем пулнă пулсан, çакă кардиограмма тумалли тата тухтăр патĕнче тăтăш тĕрĕсленсе тăмалли сăлтав. Çавăн пекех сахăр тата холестерин шайне палăртма юн анализĕ парас пулать.

Модификаци факторĕсем те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Кусем вĕсем çын хăй «тупнă» чирсем. Чĕре сывлăхĕ 20 процент вĕсенчен килет. Чĕре сывлăхне нумайлăха сыхласа хăварас тесен, çын шăпах ĕнтĕ çак факторсем çине витĕм кӳме пултарать.

Çапла вара врач çакăн пек сĕнӳсем панă:

– холестерин шайне тĕрĕслесе тăмалла;

– юнри сахăр шайне виçерсе тытмалла;

– юн пусăмне тĕрĕслеме манмалла мар;

– тăвар май пур таран сахалрах çимелле;

– йывăрăша чакармалла;

– алкоголь тата пирус пирки манмалла.

Çак правилăсене пăхăнни аслă ӳсĕмрисене чĕре тĕлĕшпе йывăр улшăнусем пулассинчен асăрханма май парĕ. Хăй вăхăтĕнчи диагностика тата сиплев вара чир-чĕре ăнăçлăрах иртерме май парĕç.

Кунпа пĕрлех активлă пурнăç йĕрки, лайăх ыйхă пирки те манмалла мар. Стрессенчен хăтăлмалла. Мĕншĕн тесен вĕсем те чĕре сывлăхĕ çинче палăраççĕ.

# Çурăм мĕншĕн ыратать?

**Раççей реабилитолог врачĕ Антон Клочков** çыннăн çурăм ыратни сиенлĕ йăласемпе çыхăнма пултарни пирки каласа панă.

Специалист палăртнă тăрăх, кун пек йăласенчен хăвăртрах хăтăлма тăрăшас пулать. Мĕншĕн тесен вĕсем çурăм ыратнине пуçарма пултараççĕ кăна мар, çавăн пекех шăмă сыпписем тата çурăм шăммин дискĕсем çийĕнессине хăвăртлатаççĕ.

Уйрăммăн илес пулсан, йывăр рюкзак тăтăш çакса çӳреме кирлĕ мар. Çитменнине рюкзак хăрах хулпуççи çинче çакса çӳрени çурăм шăммине татах ытларах сиен тăвать. Мĕншĕн тесен нагрузка ӳсет.

Çавăн пекех курпун кăларса ларни, вăл шутра ĕç сĕтелĕ хушшинче те, вăй-хал активлăхĕ пĕчĕк пулни те çурăм шăммишĕн сиенлĕ. Усăнса тăракан матрас тата тикĕс мар диван çинче çывăрни те сиен кӳрет.

Çавăнпа та çывăрмалли вырăн меллĕ, хытăлăхĕ тĕрĕс пулма тивĕç. Çывăрмалли матраса вара çыннăн физиологи уйрăмлăхĕсене кура (йывăрăш, çӳллĕш) суйласа илмелле.

Кунсăр пуçне **пĕтĕмĕшле практика врачĕ, телеведущи Александр Мясников** çавна та пĕлтернĕ. Çурăм час-часах ыратнин сăлтавĕ мышцăсен спазмĕ те пулма пултарать. Çавна май çын мелсĕр пĕкĕрĕлет. Çавăн пекех пӳсĕр пулни, шалти органсен чирĕсем, остеопороз та (уйрăмах çулланнă хĕрарăмсен) çурăм ыратассине пуçарма пултараççĕ.

# Хĕрарăмсен сыхă пулмалла

**Вуншар çул тĕнчипех ракпа кĕрешеççĕ. Паянхи куна медицинăра онкологи чирĕсемпе кĕрешессипе япăх мар опыт пухнă, ракăн чылай тĕсне ăнăçлă сиплеççĕ. Чи пĕлтерĕшли – чире маларах тупса палăртасси. Кун пек чухне пĕтĕмĕшпех сывалма та шанăç пур.**

Сĕт парĕн ракĕ – хĕрарăмсен ытларах сарăлнă хăрушă шыççи. Тĕнчипе çуллен çакăн йышши ракпа 1 млн ытла хĕрарăм чирлет. Ытларах вăл 50 çултан тытăнса 70 çулчченхи хĕрарăмсен тĕл пулать. Юлашки çулсенче вара патологи çамрăкланса пыни те сисĕнет.

**Малтанхи тапхăрта ăна мĕнле тупса палăртма май пур-ха? Тимлĕх уйăрмалли симптомсем пур-и?**

Сĕт парĕн ракĕн каварлăхĕ акă мĕнре. Чир пуçламăшĕнчех нимĕнле симптом та пулмасть. Чир паллисем пулма тытăнсан вара ку вăл пĕрремĕш стади мар ĕнтĕ. Рак ан аталантăр тесен, кашниех хăйĕн сывлăхĕшĕн тăрăшма тивĕç. Çавăнпа та сывă пурнăç йĕркине тытса пымалла, профилактика медицина тĕрĕслевĕсенче вăхăтра пулмалла тата диспансеризаци тухмалла.

Маммографи тĕпчевĕ – 40 çултан аслăрах хĕрарăмсен сĕт парĕн ракне маларах диагностика тумалли тĕп мел. Ку ӳсĕмрен çамрăкраххисенне маммографи тĕпчевĕ иртерни ун пекех эффективлă мар. Мĕншĕн тесен сĕт парĕн пителĕхĕ пысăк. Маммографи тĕпчевĕ иртерессине çитĕннĕ çынсен диспансеризацийĕн программине пăхса хунă. Çак тĕпчеве иртерме килĕшменни пулмалла мар. Мĕншĕн тесен вăл пысăк инкек патне илсе çитерме пултарать. УЗИ вара çамрăк хĕрарăмсемшĕн ытларах эффективлă шутланать.

Сĕт парĕн ракĕ малтанхи тапхăрта симптомсăр пулать. Апла пулин те сĕт парĕнче шыçăна тупса палăртма май пур. Çавăнпа та пур хĕрарăм та сĕт парне харпăр хăй тĕллĕн тĕпчессин мелĕсене пĕлме тата ăна кашни уйăхрах иртерме тивĕç. Сĕт парне харпăр хăй тĕллĕн тĕрĕслемелли чи лайăх вăхăт – менструаци пуçланиччен 5 – 6 кун маларах. Асăннă фазăра пар халсăртарах. Менотăхтав вăхăтĕнче асăннă процедурăна календарлă кашни уйăхрах пĕр кун туса иртермелле.

Харпăр хăй тĕллĕн тĕпчев иртерессин методики çаплах. Малтанах тĕкĕр умĕнче харпăр хăйне пăхса çаврăнмалла. Кайран пӳрнесен тупанĕпе выртса тата тăрса икĕ сĕт парĕн вырăнĕсене те хыпашласа пăхмалла. Чĕчĕ çине пусса пăхмалла, унтан нимĕн те тухмасть-и? Хул айĕсене те тĕрĕслемелле – лимфа вырăнĕсем пысăкланман-и? Сĕт парĕн форми улшăнни, шыçни е ӳт хĕрелни, ӳт пайĕ туртăнни, чĕчĕ çинче пĕчĕк юхан-суран пулни те чир палли пулма пултарать. Сĕт парĕ тĕлĕшпе мĕнле те пулин улшăну тупса палăртрăр пулсан, участок терапевчĕ е гинеколог патне каяс пулать.

Хăрушă шыçă чирне тупса палăртсан, чирпе кĕрешме пăрахмалла мар, ăна çĕнтерме пулать. Пĕтĕмĕшпех сывалма пултарнă тĕслĕхсем çук мар. Çын чирлерĕ пулсан, яланах виçĕ ен пур – чирлĕ çын, чир тата тухтăр. Пациент кампа пĕрле пулать, çавăнпа çĕнтерет те. Чи пĕлтерĕшли – тухтăра шанмалла, харпăр хăй тĕллĕн сиплenмелле мар.

**Антонина ТАБАРДАК, общество сывлăхĕпе медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

Сĕнӳ-канаш

# Йывăççене хĕл каçма хатĕрлер-и?



Шăнтиччен йывăç тунине тимĕр щеткăпа тасатмалла, «сурансене» варпа сĕрмелле. Ăна килте те хатĕрлеме май пур: 200 грамм ăвăса, 250 грамм солидола, 50 грамм хыр сухăрне ирĕличчен уйрăмшар ăшăтмалла. Унтан банкăра хутăштармалла. Ытлашши çăра пулсан ӳсен-тăран çăвĕ хушмалла. Шĕвеккине çăратма йывăç кĕлне аласа ямалла. Пысăках мар «сурана» марганцовка шĕвекĕпе те сиплеме юрать.

Йывăççене (улмуççи, слива, груша) хĕл ларичченшуратсан аван. Мĕншĕн тесен вĕсемшĕн хĕллехи хĕвел çути сиенлĕ. Çанталăк вылянса тăрсан – шартлама сивĕ хыççăн сасартăк ăшăтса ярсан – сĕткенĕ шăнма, хуппи çуркаланма пултарать. Шăшипе мулкач та шуратнă йывăç тунине тĕкĕнмеççĕ. Анчах çак ĕçе çанталăк шăнтиччен, типĕ те уяр кун пурнăçламалла. Лавккара ятарлă хутăш сутаççĕ. Ăна килте те хатĕрлеме май пур: 15 пай известь, 2 пай пăхăр купоросĕ, 1 пай столяр çилĕмĕ, 1 пай сĕт. Йывăç хуппине щеткăпа пылчăкран, тусанран, мăкран тасатмалла. Çĕртен пуçласа пĕрремĕш турат таран шуратмалла.

# Октябрьти ĕççем

1. Улмуççи, груша, ытти улма-çырла йывăççисем лартмалла. Çак ĕçе çанталăк сивĕтиччен 15 кун маларах пурнăçламалла.

2. Йывăççене чир-чĕртен, çимĕç шатринчен мочевина хутăшĕпе (10 литр шыва 500 грамм кирлĕ) сапмалла.

3. Тăпрана лайăхлатма тислĕк тăкмалла. Енчен те вăл çук пулсан фасоль, нимĕç пăрçи тунине, кишĕр аврине, вĕлтĕрене вĕтетсе çĕре хывмалла.

4. Бархатцы, çурла курăкĕн аврисене çунтармалла мар, вĕтетсе çĕре хывмалла. Вĕсем сиенлĕ хурт-кăпшанкăна, кăмпа чирĕсене пĕтереççĕ. Пилеш курăкĕ (пижма), мулкач курăкĕ (тысячелистник), салтак тӳми те тăпрашăн усăллă удобрени шутланаççĕ.

5. Çак уйăхра хурлăхан, йĕплĕ çырла тĕммисене сайралатмалла. Чирлĕ, хăрăк, ытлашши туратсене иртмелле. Çапла тусан çитес çул вĕсем çимĕçпе савăнтарĕç.

# Кĕркунне акма

Çуркунне пахчара ĕç нумай. Çавна май хăшне-пĕрне кĕркунне пурнăçлама май пур.

Ăста пахчаçăсем хĕле хирĕç ыхра кăна мар, сухан та лартаççĕ, петрушка, укроп, редис, шпинат акса хăвараççĕ. Кишĕрпе кăшман акакансем те пур. Çуркунне юр часах ирĕлсе пĕтмен вырăна суйласа илмелле. Паллах, шыв чылай вăхăт тытăнса тăракан лаптăк юрăхлă мар.

Тепĕр саманта та шута илмелле: вăрлăха вăхăтра акмалла. Иртерех аксан, шăтса тухнă май, шăнма пултарать. Кая юлма та юрамасть. Пĕр сăмахпа, вăрлăхăн çĕр ăшĕнче кăшт кӳпчеме кăна ĕлкĕрмелле. Çĕрне маларах чавсан аван, мĕншĕн тесен унăн пусăрăнмалла. Калăпăр, кишĕре 6 сантиметр тарăнăшне акса хăварма юрать. Севок сухана лартнă хыççăн çĕрĕк тăприпе витсен аван. Йăран çинче хĕл каçнă петрушка та «ыйхăран» иртерех вăранĕ.

Çуркунне пусĕсене кăларнă хыççăнах вĕсене мочевина шывĕпе (1 литр шыва 1 шăрпăк курупки чухлĕ) апатлантарасси çеç юлать.

# Чи усăллă мăйăр хăшĕ?

Мăйăрсем витаминсемпе тата минералсемпе пуян пулни пурне те паллă. Анчах та вĕсем организмшăн пурте пĕр пекех усăллă мар. Хăш мăйăрсене час-часрах çиме тăрăшмалла, хăшĕсене вара пачах çимесен те юрать. Кун пирки экспертсем каласа панă.

**Диетологсемпе нутрицологсен наци ассоциацийĕн диетолог врачĕ Марина Макиша** пĕлтернĕ тăрăх, кирек епле мăйăр та – тутлăхлă çимĕç, вĕсенче витаминсем, микроэлементсем тата çу нумай.

– Вĕсенчен кашнинчех насыщеннăй мар çусем пур, вĕсем çыншăн усăллă. Вĕсем холестерин шайне кирлĕ шайра тытса тăма пулăшаççĕ, клеткăсем валли строительство материалĕ параççĕ тата нерв системине пулăшаççĕ, – асăннă М. Макиша.

Анчах та кирек епле мăйăра та виçине пĕлсе çини кирлĕ. Унсăрăн харпăр хăйне сиен те кӳме пулать. Врач палăртнă тăрăх, кулленхи норма 30 – 40 грамран ытла пулмалла мар. Мăйăрсем питĕ калориллĕ. Çавăнпа та мăйăрпа иртĕхни пулмасан лайăхрах.

**Диетолог врач, нутрицолог Ирина Писарева** шухăшĕпе мăйăрсенчен хăшĕсем уйрăмах усăллă, усăллă япаласен шучĕпе ыттисенчен самай уйрăлса тăраççĕ.

Сăмахран, эксперт шухăшĕпе чи усăллисем грек мăйăрĕ, кешью, миндаль, кедр мăйăрĕ тата фундук пулса тăраççĕ.

– Усăллă енĕсемпе чи малти – грек мăйăрĕ. Унра антиоксидантсем тата Омега-3 нумай. Çавăн пекех вăл рак пулма пултарассин хăрушлăхне чакарать тата чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсене асăрхаттарать, – каласа панă И. Писарева.

Кешью усăллă япаласен шучĕпе грек мăйăрĕнчен кăштах анчах каярахра тăрать. Çав вăхăтрах антиоксидантсен тата магни çăл куçĕ пулса тăрать, нерв системине тата шăмăсене çирĕплетет.

Малти виççĕмĕш вырăнта – миндаль. Анчах та ун çине час-часах аллерги реакцийĕ пулать.

– Чару тавраш çук пулсан, ку мăйăр – белокăн, магнин, цинкăн, клетчаткăн тата Е витаминăн лайăх çăл куçĕ, – çирĕплетнĕ диетолог.

# Ирхи ӳслĕк мĕнпе çыхăннă?

**Терапевт врач, кардиолог Андрей Кондрашов** вăраха пыракан ӳслĕк хăрушлăхпа çыхăннă пулма пултарни пирки каласа панă. Специалист шухăшĕпе çакă йывăр чирсен, вăл шутра тип пыр ракĕн симптомĕ те пулма пултарать.

**Вадим Гутник онколог** шухăшĕпе вара ӳслĕке кура кăна чире уйăрма май çук. Онкологи диагностикине тăвас пулсан, тĕпчев иртерни тата анализсем пани кирлĕ.

«Ирхине ӳсĕрни – тип пыр системинче проблемăсем пуррине пĕлтерекен симптом. Ытларах чухне ку вăл çăра сурчăк пухăнса тулни. Пырта кăткăлантарнине пула ӳслĕк пулать. Çын кун пек чухне хăйне ирĕклĕн сывлама темĕн чăрмантарнă пек туять.

Онкологи пирки калас пулсан, ӳслĕк пулнипе кăна çакă шăпах ĕнтĕ онкологипе çыхăннине ăнланма питĕ кăткăс. Тĕпчевсем кирлĕ пулаççĕ: бронхоскопи (ӳпкен тĕп ракĕн паллисем палăрсан), компьютер томографийĕ е МРТ т. ыт. те. Çăра сурчăкра юн пурри палăрсан вара çакă онкологипе çыхăннă та пулма пултарать», – ăнлантарса панă врач.

Ытларах чухне ирхине йывăр ӳслĕк чылайранпа пирус туртакансен пулма пултарать. Пирус туртса пурăнни бронхит патне илсе çитерет. Вăл вара каярахпа онкологие те пуçарма пултарать.

«Çакăн пек термин пур – ӳпкен вăраха пыракан обструктивлă чирĕ. Пирус туртакан çыннăн çăра сурчăк пухăнса тулать. Çын сывăрнă чухне пирус туртмасть, çавăнпа çăра сурчăк пухăнать. Ирхине вара кун пек çынсем каçса кайсах ӳсĕреççĕ. Кун пеккисем ирхине çăвăниччененех çăвара пирус хыпаççĕ. Вĕсен çĕнĕ кун çапла пуçланать. Кун пеккисем, тип пырпа ӳпкен вăраха пыракан чирĕсемпе аптăракансем пекех, хăрушлăхпа çыхăннă ушкăнри çынсем шутланаççĕ», – палăртнă Вадим Гутник.

Онколог вĕçĕм ӳсĕрекенсене тăхтаса тăмасăр врач патне кайма сĕннĕ. Çакă вăл организм тип пырпа ӳпке системисенчи проблемăсем пирки хыттăн систерни пулса тăрать вĕт-ха.

«Ирхине ӳсĕрни ӳпке ракĕпе çыхăннă тесе çирĕплетме май çук. Анчах та «Мальборо» сигарета реклама тăвакан шурă шăллă та ковбой шĕлепкиллĕ çын шăпах ĕнтĕ ӳпке ракне пула вилнине манар мар», – аса илтернĕ онколог.

Объявление

**ИЗВЕЩЕНИЕ
О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ
О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ
ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Кадастровым инженером Правдиным Валерием Михайловичем, квалификационный аттестат № 21–13–45, почтовый адрес: Красноармейский район, с.Красноармейское, ул. 30 лет Победы, дом №16, контактный телефон: 89196691449, в отношении земельного участка с кадастровым № 21:17:080502:78, расположенного по адресу: Чувашская Республика – Чувашия, р-н Моргаушский, д. Юнгапоси, ул. Солнечная, д. 4 а, выполняются кадастровые работы по уточнению границ земельного участка. Заказчиком кадастровых работ является Греков Дмитрий Владимирович, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Ю. Гагарина, д. 53/1, кв.14, тел.89278644459.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования проекта межевания границ состоится по адресу: Чувашская Республика – Чувашия, р-н Красноармейский, р-н Моргаушский, д. Юнгапоси, ул. Солнечная, д. 4 а 13 ноября 2023 г. в 15.00 ч. Предметом согласования являются размер и местоположение границ уточняемых земельных участков.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: Красноармейский район, с. Красноармейское, ул. 30 лет Победы, 16. Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 13 октября 2023г. по 13 ноября 2023 г.

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: собственники смежных земельных участков с кадастровым № 21:17:080501:8, расположенного по адресу: р-н Моргаушский, д. Юнгапоси, ул. Солнечная, д. 4.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документы, удостоверяющие личность, а также документы о правах на земельный участок.

# Водительсене пĕлме

**Автомашина водителĕсен куллен тенĕ пекех хăйсен автомашини тĕлĕшпе тĕрлĕ ыйту сахал мар тухса тăрать, вĕсене татса пама тивет. Опытлăраххисен сĕнĕвĕсем хăшĕсемшĕн усăллă пулĕç.**

1. Резина коврик айĕнче шыв пухăннă май, автомашина тĕпĕ тутăхса çĕрме тытăнать. Опытлăраххисем коврик айне пластмасс решетке, кухньăра раковинăна хураканни йышшине, хума сĕнеççĕ. Çакă пухăнакан нӳрĕке хăвăртрах типме май парĕ.

2. Хĕлле автомашина двигательне хускатма йывăртарах. Автомашинăна çĕр каçма лартнă чухне вĕри двигателе кивĕ плед-па е утиялпа хуплăр. Аккумулятора поролонпа ăшă тытмалла тума май пур. Çавăн пекех хускатиччен двигателе ăшă вĕртмелли приборпа та ăшăтма май пур. Удлинитель кирлĕ пулать. Хăш-пĕр водитель вĕсене хĕл кунĕсенче яланах пĕрле илсе çӳрет.

3. Автомашина кантăкĕ çинче хĕлле юр шăнса ларса канăççăрлантарать. Май пур пулсан, автомашинăна стоянкăна умĕпе хĕвел тухăçнелле туса лартма тăрăшăр. Хĕвел пайăркисем кантăка çăмăлраххăн тасатма пулăшĕç.

4. Тепĕр чухне автомашинăн никель пайĕсем тата кантăкĕ çинче çу вараланчăкĕсем тупăнаççĕ. Вĕсене сигарет кĕлĕпе тасатма лайăх. Фланель татăкне шывпа йĕпететпĕр те ун çине сигарет кĕлне хуратпăр. Тасамарлăха унпа сăтăрмалли кăна юлать. Кĕл вырăнне сигарет табакĕпе те усă курма пулать.

5. Хăш чухне автомашина кабинине те апатланма тивет. Кăнтăр апачĕ е каçхи апат ан сивĕнтĕр тесен, ларкăча ăшă ярăр та апат контейнерне ун çине лартăр. Вăл çиме ăшă пулĕ.

6. Кантăк тасатмалли «дворник» тата лайăххах ĕçлетĕр тесен, шыв бачокне кăштах савăт-сапа çумалли хутăша хушма сĕнеççĕ.

7. Пирус чĕртмелли прикуривательпе усă куртăр пулсан, каяллa лартиччен кĕлне тасатма ан манăр. Унсăрăн прикуриватель лартмалли вырăнта кĕл пухăнса каять, прикуриватель йĕркеллĕ ĕçлеме пăрахать.

8. Бензин бакне шыв лекни те пулкалать. Хĕл кунĕнче ку вăл чăннипех те пăтăрмах. Пăр шăнса ларнипе цилиндрсене бензин йĕркеллĕ пыма пăрахать. Хăшĕсем кĕркунне бака изопропил спиртне кăштах хушма сĕнеççĕ. Вăл бензобак тĕпĕнче сарăлать, хăйĕн витĕр бензина çăмăллăнах кăларать. Çав вăхăтрах шывпа та, бензинпа та хутăшмасть.

9. Фарăсен кантăкĕ тĕксĕмленчĕ пулсан, шăл тасатмалли пастăпа тасатма меллĕ.

10. Гаражсем хăшĕн-пĕрин вăрăмах мар. Пуçласа руль умне ларакансенчен хăшĕсем кун пек гаража кĕнĕ чухне дистанцие тĕрĕс палăртаймаççĕ, автомашинăн малти бамперĕпе стенкăна лектереççĕ. Кун пек чухне маччаран резина мечĕк çакса яма пулать. Мечĕкне вара автомашинăна кирлĕ вырăнта чармалла чухне автомашина кантăкне пĕрěнмелле вырнаçтармалла. Хĕсĕк гаражра автомашина алăкне уçнă чухне алăк çинчи сăрă ан чĕрĕлтĕр тесен, ку тĕле стенка çине поролон çыпăçтарма пулать.

11. Кузов çинче путăк пулса тăма пултарать. Кун пек чухне сире вантуз пулăшма пултарĕ. Çавăн пекех кантăк йăтса каймалли ятарлă присоскăсемпе те усă курма пулать.

12. Каçхине тăтăшах руль умне ларма тивет пулсан, пĕлме тивĕç: хирĕç килекен автомобиль аякра пулсан та, сире пăхма чăрмантарать. Опытлă водительсем кантăк çине икĕ татăк изолента çыпăçтарма сĕнеççĕ. Водитель пуçне кăшт айккинерех пăрсанах хирĕç килекен автомашинăн фарисенчен куçсене пытарма пултаратăр.

13. Пăхăр прокладка е шайба вăхăт иртнĕ май хытса илет, сывлăш кăларма пуçлать. Кун пек чухне ăна çакса ярса газ çулăмĕ çинче хĕртмелле. Сивĕннĕ хыççăн вăл каллех çĕнни пекех çемçе те питĕ пулĕ.

14. Брелок йывăр пулманни лайăхрах. Ун пек чухне автомашина зажиганийĕн çăри часах стройран тухмĕ.

15. Кузов çинчи пĕчĕк чĕрĕксене чĕрне сăрламалли лакпа сĕрме пулать. Лак тĕсĕ автомашина тĕсĕпе пĕр пек пултăр.

